# МĂНКУН УМĔН

*Драма*

ДРАМĂРИ ÇЫНСЕМ:

Ваня — 20 çулта.
Фаина — унăн аппăшĕ, 35 çулта.
Никита — Фаина упăшки.
Ашшĕ.
Амăшĕ.
Соня — ачаллă хĕр.
Хĕр амăшĕ.
Антон — 20 çулта.
Таня — 35 çулта.
Вată хĕрарăм.
Ял çыннисем.

## ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

### Пĕрремĕш картина

Ял. Кивĕрех çурт умĕ. Ун умĕнче — хăрнă çамрăк юман. Инçе те мар чиркÿ карттишне кĕмелли хапха курăнать. Пÿрт кантăкĕсене яриех уçса янă, унта пÿрт çăвaççĕ. Пÿрт умĕнчи решеткесем çине утиялсемпе минтерсем, тумтирсем урта-урта янă. Амăшĕ пĕр минтерне илсе тепĕр сине çавăрса хума пикенет, анчах ăна çĕре ÿкерет. Унăн аллисем вĕçĕмсĕр палăрмаллах чĕтреççĕ.

Пуш витресем йăтса Никита тухать.

Никита. Хуран айне тек вутă хурас мар пуль, вĕри шыв урăх кирлĕ мар теç.

Амăшĕ. Ан хур. Пÿрт çуса пĕтерниĕ çĕре мунча кĕме хатĕр пултăр.

Никита *(ÿкернĕ минтере илсе хунă май)*. Ан нушалан, хамăрах типĕтсе кĕртетпĕр.

Амăшĕ. Тепĕр енне çавăрса хурам терĕм те, алăсем итлемеççĕ.

Никита. Лар эс.

Амăшĕ. Ларса та йăлăхтарать çав, кĕрÿ. Ашшĕне хуш-

маллаччĕ те, пÿрт тустарнине курас килмест тесе таçта тухса кайрĕ.

Никита. Ăна хушиччен... Ăнсăртран Чĕлĕме каймарĕ-и вăл? Е кăçал унта кĕтÿ кĕтме каяс шухăшлă мар-и?

Амăшĕ. Пăрусем илчĕ вĕт, каять пуль-ха.

Никита. Шыв-шур типсе пырать. Аса илтер-ха эс ăна, атту лере ун вырăнне урăххи кĕтÿ кĕтме кĕрĕшĕ.

Антон килет, вăл пысăк альбом йăтнă. Пĕр çĕре вырнаçса ларать те чиркÿ енне пăхса ÿкерме тытăнать.

Антон. Здравствуйте.

Никита ун çине кăмăлсăр пăхса илет.

Амăшĕ. Антун-çке. Ÿкерме килтĕн-и?

Антон. Унччен пуçланăччĕ те, вĕçлеймерĕм.

Никита. Мĕн, чиркÿсĕр пуçне урăх ÿкермелли çук-и сан валли?

Фаина *(уçă кантăкран кăшкăрса)*. Никита, хура шыв тăкса пар-ха.

Никита. Тăк ху, ман мунчана кĕме хатĕрлесе çитермелле.

Фаина. Тăкса пар часрах! Йĕпе тумтирпе сивĕ тула тухса çÿреме. *(Антона асăрхаса.)* О, кунта пĕри пире ÿкерме хатĕрленет пулас. Салам, Антон. Ма чĕнместĕн? Вăй патăр те хăть.

Антон. Вăй патăр.

Фаина. Антон, чиркÿ çумĕнче мĕн интересĕ тупнă эс, луччĕ хама кĕрсе ÿкер. Кур, çат çыпăçнă йĕпе кĕпе витĕр кĕлетке епле курăнать. Кĕпепе ÿкерме килĕшмесен ăна хывса пеме те пултаратăп. Сирĕн çаппа-çарамас майрасем те ÿкермелле теççĕ вĕт унта.

Антон. Çук, çарамас кĕлеткеллисене халех ÿкерместпĕр-ха, аслăрах курссенче кăна.

Фаина. Антон, çылăхлă эс. Сан çине пăхса турăш ăшне шыв кĕртрĕм. *(Çухалать.)*

Амăшĕ *(Антон патне пырса)*. Вĕренсе пĕтерейместĕн-им-ха?

Антон. Çук-ха, ăста пулас тесен нумай вĕренмелле.

Амăшĕ. Ÿкерме эсĕ капла та ăста теççĕ-ха.

Антон. Ÿкерме кăна çав. Ваня çырать-и?

Амăшĕ. Тахçантанпах хыпар çук. Те таврăнма вăхăт çитнипе, те...

Антон. Таврăнсан ăна та хампа пĕрле вĕренме илсе каятăп ак. Шкулта вунă çул пĕрле вĕрентĕмĕр, тата та пĕрлех вĕренĕпĕр.

Амăшĕ. Вĕренме маларах шутламаллаччĕ пуль те çав. Санпа пĕрлех вĕренме кĕнĕ пулсан хăть салтак нушинчен хăтăлнă пулĕччĕ, капла вара... Ăна таврăнсанах авлантарас тетĕп.

Антон. Таврăнсанах? Ма васкаса?

Амăшĕ. Мĕн кĕтмелли пур? Хĕрĕ кĕтет, ачи кĕтет...

Антон. Çапла. Анчах авлантарас пирки... Тепĕр тесен, пĕлместĕп нимĕн калама та, хăвăрăн ирĕк.

Пауза.

Амăшĕ. Антун, тĕксе калать тесе ан шутла, ача çинчен ыйтса пĕлес тесе сăмах хускатрăм та... Хам Соня амăшĕпе пĕр чĕлхе тупманнипе-ха эп. Эс вĕсем патĕнче пулкалатăн теççĕ те...

Антон. Сывах вăл, утма та пикенет ĕнтĕ.

Амăшĕ. Ку лайăх, çапла пулмалла та. Çын сăмахĕ çил çине пултăр та... Ялта тем те калаçнипе калап-ха. Çын патне çын çÿремесĕр тăмастех ĕнтĕ. Ачана ÿстернĕ чух кăшт пулăшни те мĕне тăрать.

Антон. Эпир Соньăпа мĕн ачаран юлташлă, эсир ан шутлăр эпĕ ун патне...

Амăшĕ. Çук-çук, юлташлă пулни лайăх вăл. Соньăпа та, Ваньăпа та юлташлă ÿсрĕн. Çавăнпа ял çинче сăмах вакламалли те çук теп çав. Эсĕ те хам ача пекех маншăн. Халиччен килĕштереттĕрччĕ Ваньăпа, малашне те сирĕн çума усал ан çулăхтăрччĕ. Вăл таврăнсан майлашĕ те-ха.

Антон. Ан çулăхтăр çав, ун çумне ан çулăхтăр. Таврăнтăр-ха ак... Эпĕ кĕтеп ăна. Эпир пурте ăна кĕтетпĕр.

Чиркÿ хапхинчен Вата сынсем тухаççĕ. Вĕсем çаврăнса сăхсăхаççĕ те тĕрĕ енне саланаççĕ.

Вата хĕрарăм. Паянхи кун Турă ÿтне хура шывпа вараланаççĕ. Çылăхран та хăрамаççĕ-ши?

Хĕр амăшĕ. Чиркÿ çумĕнче пурăнса чиркÿ тĕлне пĕлмеççĕ те вĕсем, çылăх пулнине пĕлеççĕ-и?

Вата хĕрарăм. Çавăнпа хăйсенчен усал хăпмасть те. Çылăх тума çеç мар, çылăха касарттарма та пĕлмелле. *(Антон енне сĕлтсе.)* Ав маттур ача, чиркĕве те çÿрет, çынна та ыр тăвать. Хăлхана кĕчĕ-ха, сирĕн киле иленнĕ тет. *(Хĕр амăшĕ ăна тем каласшăн пулнине пĕлсех.)* Çук-çук, кунта пăсăкли ним те çук. Хĕрÿн телейĕ пултăр, мăнукун та.

Хĕр амăшĕ. Эпĕ вĕсемшĕн кĕлтăватăп та.

Вата хĕрарăм. Шыва кĕртмерĕр-и-ха пĕчĕккине?

Хĕр амăшĕ. Эпĕ кĕртесшĕнччĕ те, Соня...

Вата хĕрарăм. Ачин ашшĕ тенине кĕтет пуль-ха.

Хĕр амăшĕ. Пĕлместĕп, такама кĕтет вăл. Хамăн ҫинче тăмалла-и-ха...

Ватă хĕрарăм. Тĕрĕс, никама та кĕтмелли ҫук. *(Антон енне тĕллесе.)* Ун пек йĕкĕте вĕҫертсен ухмах пулать. Ун пеккисем йăваланса выртмаҫҫĕ, ята ямаҫҫĕ. *(Амăшĕ енне тĕллесе.)* Кусемпе ҫыхланиччен... Ав, мĕскĕн, ларать ĕнтĕ чĕтресе.

Хĕр амăшĕ. Юрĕ, ҫак типĕре вĕсем ҫинчен калаҫса ҫылăха кĕрер мар. Эй, Турă, каҫар. Турă, каҫар. *(Сăхсăхаҫҫĕ те тĕрлĕ енне каяҫҫĕ.)*

Амăшĕ *(Хĕр амăшне иртсе кайнă чух чарса).* Ерҫместĕн пуль те, калаҫса илесшĕнччĕ эпĕ санпа.

Хĕр амăшĕ. Эс мĕн калассине ахалех пĕлетĕп эпĕ. Иртнинче эп татăклă каларăм, ҫавăнпа сăмах та ваклар мар. Пурпĕр эпир пĕр-пĕрне ăнланмастпăр.

Амăшĕ. Чысĕ сахалтарах ҫав пирĕн ҫумра.

Хĕр амăшĕ. Никам та хăйĕн ачине усал сунмасть: эсĕ те, эпĕ те. Йăнăш турĕҫ, анчах тек хăйсен ирĕкĕпе ҫеҫ пурăнаймĕҫ. Вăл ман пĕртен-пĕр хĕр, тĕрĕс ăнлан мана.

Амăшĕ. Ваня ачаран лăпкă ӳсрĕ. Усал тăвас тенипе мар, юратнипе ача пирки шутларĕҫ пуль.

Хĕр амăшĕ. Те пур вăл юрату, те ҫук — шуйттан пĕлет-и? Ак каллех... Ку ачасемпе ҫылăха ҫеҫ кĕрен. Эй, Турă, каҫарсам. *(Чиркӳ енне ҫаврăнса сăхсăхать.)* Ăҫтан чарăнса... *(Кайма тăрать. Ун ҫулне хура шыв тăкма тухнă Фаина пӳлет.)*

Фаина. Анне, мĕн калаҫса тăратăн эсĕ ҫавăнпа? Камшăн, унăн хĕрĕшĕн-и? Тупăннă таса ҫынсем! Турра ĕненеҫ иккен вĕсем! Хăйсем чиркӳрен тухсанах ҫынна кăшлаҫҫĕ.

Амăшĕ. Юрамасть ун пек, Фаина.

Фаина. Юрамасть? Вĕсене юрать те — пире юрамасть-и? Камсем вара вĕсем, ҫылăхлă пирĕштисем-и? Хĕрĕ ҫеҫ мар, вăл хăй те хĕр пуҫăн ача ҫуратнă.

Хĕр амăшĕ. Ҫылăх сана, ҫынна усал сунатăн. Хĕрарăма ача ҫуратма тунă. Ача ҫуралниче пăсăкки ҫук. Сан пек хĕсĕр арăм пуличчен...

Фаина. Сан ĕҫ мар! Таплаттар кунтан часрах, атту халех ху тăрăх хура шыв яратăп.

Хĕр амăшĕ. Кай, ан ҫыпăҫ ман ҫума. Усал эс, унăшку пур ҫинче ют арҫынсене астарса пурăнан.

Фаина. Мĕ-ĕн?

Хĕр амăшĕ. Пĕтĕм ял калаҫать, ачасем курнă.

Фаина. Эп сана кăтартап ҫиччас... Эп сана... *(Хĕр амăшĕ енне шыв сапать.)*

Хĕр амăшĕ. Намăссăр, шуйттанран тăван эс! Ылхан сана!.. *(Каять.)*

Амăшĕ. Фаина, çылăхран хăра.

Фаина. Пуççапмалла мар-и тата ăна? Тен, вĕсен çылăхĕсене те хамăр çине илмелле? Пире юрать, эпир чăтатпăр. Тĕнчери пур çылăхсене пирĕн çине тиесен те чăтатпăр. Çынсем пире усал сунсан та савăнатпăр çеç.

Амăшĕ. Эс туссах кайрăн.

Фаина. Эп мар, вĕсем тусса кайнă. Ваньăна тиркетха! Хăйсене кам тиркемелле? Пĕринчен çуратаççĕ, тепринпе пурăнаççĕ. Пуç тӳпи таран варалансан та таса пек курăнма пăхаççĕ. *(Антон патне пырса.)* Ма чĕрене ыраттаран-ши эс? Сана пула мĕн чул сăмах. Хут çине ӳкерниĕех тĕнчене илем кӳрĕп тетĕн-и? Хут çине темĕн те ӳкерме пулать, хут чăтать. Пурнăç ӳкерчĕкĕ вара пач урăх. *(Антонăн альбомĕнчи хучĕсене илсе ывăтать, пĕрне каялла çĕклет.)* Ах, çак-и-ха вăл пурне те пăтратаканни? Кур, епле выртать. Ма хăйне çеç ӳкертĕн, амăшне те юнашар вырттармаллаччĕ, илĕртӳллĕрех пулатчĕ. *(Амăшне ӳкерчĕк кăтартса.)* Эс тахçанах ăна курасшăнччĕ, акă кур. Çапçамрăк, тап-таса, хитре, ытармалла мар чăр пăхса выртать. Кур, пăхса савăн мăнуку çине. Йăх тăсакан пур халĕ сирĕн. Акă вăл çылăхăн тĕшши. Çынсем çылăх тусах телей тупаç, эпир вара...

Никита *(килет).* Фаина, чарăн халех.

Фаина. Кай кунтан, курам та мар сана. Упăшкаллă тенĕ сăмах та илтем мар. Мĕн усси санпа пурăнни? Çут тĕнчене сая ярса пурăнни çеç! Ĕçлетпĕр кунĕн-çĕрĕн, çапăçатпăр. Камшăн, мĕншĕн? Кашни тымартан, кашни вăрлăхран ешĕл курăк шăтса тухать, пирĕн вара... Ма саврăм-ши сана? Ма качча тухрăм-ши? *(Выртса йĕрет.)*

Никита. Çитĕ сана! Апай, кала ăна мĕн те пулин.

Амăшĕ. Мĕн калама пĕлĕп эпĕ кун пек чух?

Фаина. Мĕн чухлĕ кĕтрĕм, шантăм — пурпĕр усси пулмарĕ. *(Никитăна.)* Ну, мĕн тăран, ту-ха мĕн те пулин! Пултараймастăп эпĕ кун пек текех пурăнма. Е пăрахса каятăп, е...

Никита *(урса).* Эпĕ те! Сана çеç мар, мана та йăлăхтарчĕ кун пек пурнăç. Ан пăх!.. Ан пăх ман çине ун пек куçсемпе!.. Ан айăпла мана! Ан айăпла, унсăрăн...

Фаина кĕрсе каять. Никита йĕтĕр илсе минтерсене çилĕпе шаккама пуçлать. Кайран йĕтĕрне ывăтать те Антон патне пырса ăна кăкăртан ярса илет.

Ма ӳкеретĕн эс ку таса вырăна? Чуну хура вĕт хăвăн.

Антон. Эс ăна пĕлерех паратăн-и?

Никита. Курнă-курнă та, сан пеккине курманччĕ-ха. Патак ачи вĕт эсĕ. Афганра пулнă пулсан, пĕлетĕн-и, мĕн тунă пулăттăмччĕ эп сана?

Антон. Пĕлместĕп, сан чуну ăшне кĕрсе курман, эсĕ те çавах.

Никита. Тепре кăна илтем мĕн те пулин, вара эпĕ сана...

Антон. Эс ытларах итле çын сăмахне.

Никита. Юрĕ, хам пирки манам. Ваня хĕрĕ патне çÿрет тени те сăмах çеç-и?

Антон. Ку урăх тĕслĕх.

Никита. Эс хăвна Ваньăпа юлташлă тетĕн-и-ха? Юлташ сан пек пулмасть. Юлташ юлташшăн пурăнать, вилет те уншăн ăна вилĕмрен çăлас тесе. Эс вара... Ула эс, ÿкерчĕкÿ пекех ула. Тасал. Тек курам мар сана кунта, курсан...

Антон. Эп вилĕме куçран пăхса курман. Çынпа туслă пуласшишĕнех вăл курнине курмаллах тенине те йышăнмастăп. Кашнин хăйĕн шăпа, телейĕ те, асапĕ те урăх. Телей те хамăртан килет, инкек тÿсни те хамăра пула, теприн çине йăвантармалли çук.

Никита. Чиркÿ çакăн пек пулмасть вăл, çĕнĕрен ÿкер. *(Ÿкерчĕкне илсе çурса тăкать те йĕтĕрне илсе япаласем шаккама пуçлать.)*

Ашшĕ килет. Вăл шăпăрлăх хурăн вуллисем тата аврăлх патаксем сыхса йăтнă. Пурне те çĕре пăрахать.

Ашшĕ. Эсир вăрçăнни касă вĕçне илтĕнет. *(Пĕр патакне илсе Никита енне ывăтать.)* Ак ме вăрăммине, чуну ытларах канĕ. Килĕшмест пулсан ме вăрăм хулă. *(Никита енне хулă ывăтать.)*

Никита. Эп кĕтÿç мар.

Ашшĕ. Эп вара кĕтÿç, хĕрĕх çул кĕтÿç, вара мĕн? Пурпĕр алла хулă тытса курман. Хам валли илсе килмерĕм эп ăна, айванраххисем валли. Хам валли вара... Кĕтĕве кирлĕ пушă. Мĕнле пĕрре шартлаттаран!.. Е пушăпа та итлемест пулсан ак çакăн пек итлет. *(Кирза аттин кунчинчен çĕçĕ кăларса вулăсене çыхнă пушăтне касса ярать.)*

Амăшĕ. Ун айне хăвăн пуласчĕ сан, тен, çак куна курман та пулăттăм. Пушăпа тата çĕçĕпе хăратнипех хама хисеплеттеретĕп тетĕн пуль. Ачаран çĕçĕ айĕнче пурăннипе Юрик те чире кайса вилчĕ. Тата кам вилĕмне кĕтетĕн-ши?

Ашшĕ. Сассу айванах мар-ха, пурăнатăн-ха.

Амăшĕ. Санпа юнашар пурăнма чул чĕре кирлĕ.

Ашшĕ *(шăпăр çыхса авăр лартнă хыççăн)*. Пÿрте çеç мар, пĕтĕм кил-çурта тасатаç ăна. *(Хапха уçса ярса картиш шăлма пуçлать.)*

Никита. Усси тасатнин! Çурт тасатиччен чунсене тасатасчĕ.

Антон *(аякка тинкерсе)*. Ваня килет. Ваня килет!

Пурте ĕçлеме чарăнса аякка тинкереççĕ.

Çутă сÿнет.

### Иккĕмĕш картина

Çавăнтах. Каçхине. Пÿртре ĕçкĕ шавĕ илтĕнет. Хапхана ярнех уçса янă, картишĕнче çамрăксем ташлаççĕ. Амăшĕ тухать. Кăшт тăрсан ун патне Фаина пырать.

Фаина. Пÿртрех лармаллаччĕ сан, анне.

Амăшĕ. Ваня ăçта-ши?

Фаина. Ав ташлать.

Амăшĕ. Ăна куç умĕнчен тартас килмест.

Фаина. Халь таврăнчĕ ĕнтĕ, ниçта та каймĕ. Халь пирĕн каймалла.

Амăшĕ. Ăçта? Ан васкăр, вырăн кашнин валлиех çитет.

Фаина. Капла та кунта икĕ çула яхăн пурăнтăмăр. Вырăн çитменнипе мар, анне. Кил ăшши пулсан таçта та пурăнма пулать. Эп ывăнтăм. Çук, сана пăхса мар, ун пек ан шутла. Кунта пурăнса ял пурнăçне хăнăхсах кайрăмăр, хулана туртмасть те темелле, анчах... Пурĕ пĕр пĕрре каймалла.

Амăшĕ. Сирĕн те хăвăрăн çемье çав ĕнтĕ. Капла та хам ÿкĕтленипе... Эсир килмен пулсан çак куна çити пурăнас та çукчĕ. Юрать кĕрÿ хирĕç пулмарĕ. Кăмăллă çын вăл, теприн хуйхине чухлать.

Фаина. Ытлашшипех. Манăн хуйха кăна чухласшăн мар.

Амăшĕ. Эс унпа ытла кăра хăш чух.

Фаина. А мĕн пĕр черккелле ĕçлесе çÿрет, хăçантанпа пĕр пус памасть. Ĕçмесен ун халиччен укçа айĕнче пурăнмалла. Сварка тума пурте ăна чĕнеççĕ.

Амăшĕ. Халăхăн укçи çукрах пуль çав. Фаина, кайма пит васкамалла марччĕ пуль теп сирĕн. Каяс пулсан та кайиччен Ваньăна мăшăрлă туса хăварсан лайăхчĕ.

Фаина. Кампа?

Амăшĕ. Амăшĕ хирĕç те, хĕрĕ килĕштерет пулсан... Ачи Ваньăран теççĕ те...

Фаина. Вăл Ваньăна кăна мар, ыттисене те килĕште-

рет. Антон ав вӗсем патӗнчен тухма пӗлмест. Ачи такамран-ха: те Ваньӑран, те...

Амӑшӗ. Пӗлмесӗр ҫынна апӑплама ан васка.

Фаина. Маншӑн пулсан хӑть мӗн тутӑр: хӑть авлантӑр, хӑть... Халь тин пӗчӗк ача мар, хӑйӗн те пуҫӗ пур.

Вӗсем патне Ваня пырать.

Ваня *(амӑшне ыталаса)*. Анне...

Амӑшӗ. Ваня... Ташламаллачӗ-ха.

Ваня. Кӑмӑл ҫук, хама ирӗксӗрлес килмест.

Фаина. Эпӗ кӗрем-ха. Хӑнасене тепре сӗтел хушшине лартиччен улма тӳсе хурам. *(Кӗрсе каять.)*

Амӑшӗ. Санпа юнашар ларса калаҫма та вӑхӑт ҫук паян.

Ваня. Анне, ман сана валли пӗр япала пур. *(Кӗсйинчен тутӑр кӑларать.)* Акӑ, тутӑр. Вокзалта пӗр цыган арӑмӗ ҫулӑхрӗ. «Можно вас спросить», — тет. Эп: «Можно», — терӗм. Вӑл ман ҫине темле пӑхса илчӗ те: «Нет, ничего не надо», — терӗ. Эп пӑрӑнса кайрӑм ҫеҫ, мана тӳрех хӑваласа ҫитрӗ те: «Дай руку», — тет. Эп алӑ тӑсса патӑм. Вӑл ун ҫине пӑхса илчӗ те: «Дай я тебя расцелую», — терӗ. Унтан ҫамкаран чуптуса илчӗ. Кайран пилӗкӗнчи пӗр тутӑрне салтрӗ те мана тыттарчӗ. «Дай своей матери и поклонись перед ней», — терӗ. «У меня денег нет», — теп. Вӑл мана: «Ступай, ступай быстрее», — терӗ те пӑрӑнса кайрӗ. Те эпӗ киле пушӑ алӑпа таврӑннине курса пачӗ, те...

Амӑшӗ. Сан ӑна мана мар, Соньӑна памаллачӗ пуль. Эс таврӑннине илтрӗҫ пуль, кӗтеҫҫӗ пуль сана. Кай вӗсем патне, ывӑлӑм. Килес тесен илсех кил.

Антон килет.

Антон. Ваня.

Ваня. Антон. Хавас килнӗшӗн.

Антон. Паҫӑр калаҫаймарӑмӑр санпа.

Ваня. Каймалла марччӗ сан, пӗрле мунча кӗрсттӗмӗр. Пӗлетӗн-и, тӗлӗкри пек туяп хама. Ӗненес килмест таврӑннине.

Антон. Тӗлӗк сирӗлет вӑл.

Ваня. Вӗренетӗн-и?

Антон. Заочно.

Ваня. Маттур эс. Талант.

Антон. Талант? Кӑштах пур пуль ӗнтӗ. Анчах унпа ҫеҫ телейлӗ пулаймӑн. Телейлӗ пулас тесен... Мӗн ман ҫинчен калаҫатпӑр-ха эпир? Ху ҫинчен каласа пар. Вӑрҫӑ мӗнне те тугантарнӑ теҫ сана.

Ваня. Халь пӗтӗм пурнӑç — вӑрçӑ. Хӑвӑр мӗнле кунта?

Антон. Эпир? Эпир сана кӗтрӗмӗр. Телейлӗ эс, сана кӗтекенсем нумай.

Ваня *(сигарет тивертет, Антона та сӗнет)*. Туртатӑн-и?

Антон. Çук.

Ваня. Тӗрӗс, сиенлӗ. Эп ак туртатӑп, пулӑшать.

Антон *(картишнелле пӑхса)*. Мӗн чухлӗ хӗр кунта.

Ваня. Çавӑрса яр пӗрне.

Антон. Çук, кирлӗ мар.

Ваня. Ма? Хӗрсем сан пеккисене ытларах кӑмӑлласçӗ.

Антон. Ваня, тӗрӗссипе каласан, эпӗ кунта...

Ваня. Эсӗ васкатӑн-и?

Антон. Çук, васканипе мар, эпӗ...

Ваня. Тен, пӳрте кӗрсе пӗрер черкке ярар? Халь аннесенчен пытанса мар ӗнтӗ. Мӗн кӑна аташмастӑмӑрччӗ ача чухне. Алӑсене касса юнсене пӗрлештерниие астӑватӑн-и? Юн пӗрлештернипех тӑванлашатпӑр тенӗ-ши?

Антон. Ман кун пирки аташнӑ тес килмест.

Ваня. Çапла, тӑванлӑх туйӑмӗ — вӑйлӑ туйӑм.

Антон. Юлташ туйӑмӗ те вӑйсӑр мар.

Ваня. Юрату туйӑмӗ вара?

Антон. Юрату туйӑмӗ сирӗлме пултарать.

Ваня. Эс ху ӗненетӗн-и вара ху мӗн каланине?

Антон. Эпӗ? Пӗлместӗп. Каçар мана.

Ваня. Çук, ху каçар.

Антон. Пӗл, маншӑн эсӗ ют мар.

Ваня. Эсӗ чӗтретӗн.

Антон. Сулхӑнлата пуçларӗ. Тен, пӗрле касӑ вӗçӗнчи çурта çитсе килер?

Ваня. Атя луччӗ пӳрте.

Антон. Сан чӑтӑмлӑху пысӑк.

Ваня. Чӑтӑмлӑх? Пулӗ те.

Антон. Ваня, эс салтака кайиччен эпир ялан виççӗн пӗрлеччӗ. Эп пит пӗрлех пулмасан та, пурпӗрех... Кайран эс кайрӑн. Кала-ха, мӗн шутланӑ эсӗ ман пирки, Соня пирки?

Ваня *(сигаретне пӑрахса)*. Сигарет нӳрленнӗ, хӑйне хӑй сӳнет. Урӑххине илсе тухам-ха.

Ваня килне кӗрсе каять. Кӑшт тӑрсан Антон та каять. Никита курӑнса каять.

Амӑшӗ. Кӗрӳ, кил-ха. *(Никита амӑшӗ патне пырать.)* Эп Соня пирки-ха, курӑнмасть вӑл тем. Ваня та вӗсем патне

кайма шутламасть пулас. Ăна ача пирки хăшĕ те пулин каларăр-и? Ма нимĕн те чĕнместĕн?

Никита. Апай, вăхăта ан васкат. Ача пирки пĕлет вăл, эп мунчара каларăм. Хăйне те хальлĕхе ытлашши ан тĕпче. Пурăнар-ха, веçех хăй вырăнне ларĕ.

Амăшĕ. Пĕр-пĕринчен ан писчĕр тетĕп-çке. Тата çакна ыйтса пĕлем-ха. Эсир пĕрле мунча кĕтĕр. Çан-çурăмĕ еплерех ун, тĕрĕс-тĕкелех-и?

Никита. Суран йĕрĕсем çук.

Амăшĕ. Сывах апла. Хăть ку тĕлĕшпе турри шелленĕ. Телейĕ пур-ха хăйĕн.

Никита. Интереслĕ, пур йывăçсем те папкасем сара пуçларĕç, юман васкамасть. Мĕн терĕн эс, апай?

Амăшĕ. Телейĕ пур теп ун.

Никита. Телей? Камăн, Ваньăн-и? Пур та пуль, кам пĕлет. Телей мĕн иккенне пĕлмесĕр епле калăн. Ӳт çинче суран çукки вăл ниме те пĕлтермест. Темле сурана та чăтса ирттерне пулăттăм, ак çакăнтине çеç... *(Кăкăрне шаккать.)*

Фаина салтак кительне илсе тухать.

Фаина *(пурте илтмелле)*. Ваньăн орден пур.

Ваня *(Фаина патне чупса пырса кительне туртса илет)*. Ма туртса кăлартăн эс ăна?

Фаина. Ху ма каламастăн вара? Мухтан мухтава тивĕç тĕк.

Ваня. Ман мар вăл.

Никита. Епле сан мар? Мĕн, теприне хывса илтĕн-и?

Ваня. Пама манах панă, анчах йăнăшпа.

Никита. Эс, шăллăм, сăмахусене шутласарах калаç. Пачĕç пулсан — çак ăна кăкăр çине пурте курмалла.

Ваня. Каларăм йăнăшпа панă тесе. Каялла тавăрса памалла.

Никита. Сан мар, урăххисен вăтанмалла, сана унта яракансен. Эс хушнине пурнăçланă. Çын хушнине те, чун хушнине те.

Ваня. Чун хушнине мар çав, çын хушнине кăна. Чун урăхларах хушатчĕ. Чун хушнине кăна тăвас килетчĕ те, эп вара... Каçар мана, каçар, анне. Ухмах сан ывăлу, çылăхлă та, анчах ан айăпла мана. Пĕтĕмпех çав вăрçа пула ку. Пурăнатпăр-ха, анне. *(Амăшĕ умне чĕркуçленет.)*

Ашшĕ тухать, вăл самай ӳсĕр.

Ашшĕ. Мана ма каламастăр вара? Ваня, ăçта-ха ордену? Кăтарт açуна, курса савăнам. *(Кительне илет.)* Мат-

тур, ывăлăм. Амăшĕ, кур, мĕнле йăлтăртатса тăрать. Мĕнле чыс! Мĕнле хисеп! Ялĕпе пĕрре вĕт эсĕ халĕ, Ваня! Савăнăр, тăмсайсем! Эсир тĕлленме те пултарайман ялала вĕт ку. Хытса тăмалла мар халь сирĕн, ăна ур-ра çĕклемелле. Атьăр-ха пурте пĕрле...

Ваня. Атте, кирлĕ мар.

Ашшĕ. Вĕсем сана чыс тума килнĕ — чыс туччăр. Мĕн, янтине ĕçсе çиме кăна килнĕ-и? Сан пек паттăра та чыс тумасан мĕне пĕлсе ман вĕсене хăналамалла? Янтишĕн çеç пулсан — тасалăр! Йытă пуçĕсем эсир, çынна хисеп тăвассинчен хăратăр.

Фаина. Çитрĕ иккен ĕçки.

Ашшĕ. Ваня, хăвала вĕсене, выç кашкăрсем вĕсем. Чыс пулнăран мар, çын пĕтнĕрен çеç савăнаç вĕсем. Ан ĕмĕтленĕр, эп пĕтнине кураймăр, ман шăнăрсем çирĕп-ха. Кирлĕ пулсан çак юмана та çурмаран авса хуçатăп. Анчах эп сирĕн пек ухмах мар, ăна тĕкĕнместĕп. Ваня юманĕ вăл, вăл çуралнă çул шăтса тухрĕ. Астăватăн-и, амăшĕ, эпĕ ун чух тĕрех ун йĕри-тавра карта тытса илтĕм, выльăхсем ан хуçчăр тесе. Ваня, сана та никама тĕкĕнтерттерместĕп. Эс пирĕн чыс. Эс пирĕн ята ямарăн.

Фаина. Çук ята мĕн ямалли.

Ашшĕ. Атту Çара Сантăр çара тесçĕ. Çара пулнăран яловăй атăпа çÿрет-и Сантăр? Ывăла та илсе паратăп. Атăсене кусĕски пек çутатса яратпăр та — орден çакса ял тăрăх утса çавăрнатпăр, ăмсанччăр Çара Сантăра. Ман ывăл — чыслă çын, пуç тайăр ăна, мана та, амăшне те. Кил кунта, амăшĕ, хамăрпа тăр. Паттăра çутă кун панăшăн хăть хисеп тумалла сирĕн пире. Кала ак, Ваня, пурин умĕнче те: эс хисеплетĕн-и пире? Эпир сана хисеп туса хăна пухрăмăр. Эсĕ хисеп тăватăн-и асупа аннÿне? Çук, ан кала, пыр малтан, ĕçмелли илсе тух. Çук, эпĕ хамах. *(Каять те черккесемпе эрех кĕленчи илсе таврăнать.)* Ну, сăйла. *(Эрех кĕленчине Ваньăна парать. Ваня черккесем тултарать.)* Чим, ан васка. Малтан кала: хисеплетĕн-и пире е йысну пек ячĕшĕн çеç сăйлатăн-и? Ячĕшĕн çеç пулсан...

Амăшĕ. Сăйлать пулсан хисеплет ĕнтĕ, Сантăр.

Ваня. Анне, атте, сирĕншĕн. *(Ĕçет.)*

Ашшĕ. Вăт ку манăн ывăл. Тавах, ывăлăм. *(Ĕçет.)* Пĕлĕр, çапăçса çеç пурăнмастпăр эпир, савăнма та пĕлетпĕр. Эп нумай кĕтрĕм сана: эс çураласса, эс çитĕнессе, кайран эс салтакран таврăнасса. Кĕтрĕм, кĕтмен тесе ан кала.

Ваня. Атте, эп нимĕн те каламарăм-çке.

Ашшĕ. Каламастăн çав, хăш чух мĕн те пулин кала эс.

Куçпа та ан вылят. Иккĕленӳ ан пултăр пуçăнта, вăрттăнлăх та. Тепĕр тесен, вăрттăнлăх та кирлĕ хăш чух. Пур ман та пĕр вăрттăнлăх сан валли, анчах хальлĕхе ăна уçса пама иртерех-ха. Вăхăт çитсен эп сана савăнтарăп-ха. Ун чухне ыталаса илсех çăвар тулли «атте» тейĕн мана.

Амăшĕ. Савăнтарсан тем пекехчĕ те, çынна савăнтарма мантăмăр пуль çав эпир.

Ашшĕ. Аннӳне ан итле, вăл ялан макăрать. Макăрас вăхăт иртрĕ, Ваня, çăва тухатпăр. Пĕлетĕн-и, ку мĕне пĕлтернине? Кала ак тӳррипе: çăтмах мĕнне туйса курас килет-и сан? Атя ыранах Чĕлĕме. Пыратăн-и? Хĕр те тупса паратăп сана. Пĕлетĕн-и, мĕнле маттур вĕсем мессерле выртнă чух! Çаранĕсем тата, сад пахчисем, уçă çăлкуçĕсем хăйсем кăна мĕне тăраççĕ! Леш тĕнчере те эс ун пек çăтмах кураймăн. Пыратăн-и?

Ваня. Атте, эп...

Ашшĕ. Тĕрĕс, кунта юл. Эп илтрĕм-ха эс кунта вăрлăх акнине. Мĕскер шутлатăн, кунта илсе килесшĕн-и ăна? Çаппа, кунта тăвăр. Аннӳ айăплă, укçа тытма пĕлмерĕ. Çурта аслăлатмалăх ĕçлесе илмен-и эп хам пурнăçра? Чаплă учительтен кая мар ĕçлесе илнĕ эпĕ çу каçа, хĕлле те хурал тăнă. *(Арăмĕ енне тĕллесе.)* Эс вара ялан макăраттăн. Макăрнипе пурнăç каймасть. Ак халĕ те макăрса çеç ларан. Сан мар, манăн макăрмалла, эс вара... Çапмалăх та çук вĕт хăвна! *(Арăмĕ çине алă çĕклет.)*

Ваня. Атте! *(Ашшĕн аллине ярса илет.)*

Ашшĕ *(ахăлтатса кулса ярать)*. Атя-атя, антар алла. *(Ваня ун аллине вăйпа антарать.)* Маттур, çапла пулмалла та. Пурнăçра тĕлĕнтермĕш нумай, çапла-и? Ан пăх ман çине усал куçупа, ман ăна çапас шухăш пулман. Çапмасăрах вăл вилнĕ чун. Эп сан шухăшна кăна тĕрĕслерĕм. Кала-ха, саншăн мĕн çăмăлтарах: ал çĕклеме е ал тăсса пама? Татах куçна вылятан? *(Шăл витĕр кулса йĕри-таврапăхса çаврăнать.)* Эсир вара савăнатăр. Ман патăмра хăналанса манран кулатăр. Эпĕ сире халех... Тасалăр ман çуртран, пурсăра та курам мар! Тасалăр! *(Пурне те хăваламапуçлать.)*

Фаина. Мĕн пăхса тăратăр, çыхса пăрахăр ăна. Кунпа çеç чарăнать-и вăл?

Никита. Эп ывăнтăм унпа çапăçса.

Фаина. Пĕтмест те вĕт хăть.

Ашшĕ *(Фаинăпа Никитăна)*. Эсир те тухса кайăр! Килсĕр йытăсем эсир, ыйткалакансем!

Никита. Хуп çăварна эс! *(Фаинăна.)* Е эсĕ татах укçа илтĕн-и унран?

Фаина. Илмен эп.

Ашшӗ. Арӑмна ача ҫураттараймастӑн, ҫапах манпа ҫапӑҫасшӑн. Хӗсӗр чунсем эсир, пушӑ чунсем.

Никита. Ну эп сана!..

Никита ашшӗне ярса илсе аллисене хыҫалалла туса ҫыхма пуҫлать. Фаина ӑна пулӑшать.

Ашшӗ. Яр мана, душман! Ваня, пулӑш!

Никита. Ак сана душманшӑн! *(Ашшӗне ҫапать.)* Тепре кӑна ҫӑвар уҫ, вара эп сана чӑн та душман вырӑнне... *(Ашшӗне сӗтӗрсе каять.)*

Ваня. Аннс, мӗнле пурнӑҫ ку? Пирӗншӗн ҫеҫ ҫапла-и?

Амӑшӗ. Чӑт, Ваня, чӑт.

Никита *(таврӑнса, Фаинӑна)*. Пуҫтар япаласене, ырана каятпӑр. Ывӑнтӑм эпӗ унпа ҫапӑҫса. *(Ваньӑна.)* Эсӗ те пурӑнаймастӑн. Ҫемьепе мар, пӗччен те пурӑнаймастӑн. Таврӑннишӗн ан савӑн, тар часрах кунтан.

Фаина. Аннене пӑрахса-и?

Никита. Пӗтетӗн эс, ак каларӗ тейӗн. Хӗрарӑмсене пулах пӗтетӗн. Пӗтес мар тесен... атя манпа.

Фаина. Татах ун патне-и?

Никита *(ҫиллес)*. Эс вара ан чӗн. Ан чӗн! Аҫу тӗрӗс каларӗ: эс пуш-пушӑ. Е эпӗ суккӑр тетӗн-и? Курмасан туйса та илмӗ тетӗн-и? Эпӗ чӑтап-чӑтап та вӗт, кайран пӗр тытӑнсан... *(Ваньӑна.)* Атя!

Фаина. Эп ҫунтарса яратӑп ун ҫуртне, сана та унпа пӗрлех, ӑшаланӑр вут ҫинче.

Никита. Ӑшаланнӑ сахал мар. Вут хӑратмасть мана. Хӑратма мар, тен, тунсӑхлатӑп та эп уншӑн. Ҫунтар, тен, пӑрланнӑ чӗрене вут кӑшт ирӗлтерӗ. *(Эрех кӗленчине илсе, Ваньӑна.)* Атя!

Никитӑпа Ваня каяҫҫӗ.

Фаина. Ан кай! Ҫаврӑн! Никита! Ваня! Ҫунтарса яратӑп эп сире!

Амӑшӗ. Фаина, сан хӑш чух чӗнмесӗр юласчӗ. Чылай чух эсӗ ху пуҫлан.

Фаина. Эс те ун пек калан. Ялан эп айӑплӑ уншӑн та, саншӑн та, аттешӗн те. Тен, эп те урӑх ҫемьере ӳснӗ пулсан кун пек кун курмӑттӑм. Эп ылханатӑп ку киле! *(Вырт-са йӗрет.)*

Ҫутӑ сӳнет.

## Виççĕмĕш картина

Соньăсен килĕ. Çав каçах. Соня пăлханнă. Алăка шаккаççĕ. Соня васкаса пырса алăка уçать. Антон кĕрет.

Соня. Ку эсĕ-çке. Вăл вара? Вăл ăçта? Ма килмерĕ? *(Антон ним калаймасăр тăрать.)* Каçар мана, эп сана тӳрех... Ирт, лар. *(Иккĕш те лараççĕ.)* Ну, эп итлеп сана.

Антон. Вăл кунта килмест.

Соня. Мĕн? Килмест? Мĕнле килмест? Эс мĕн палкан?

Антон. Эп сана малтанах каларăм, эс вара... Эс нихăçан та эп каланă пек тумастăн.

Соня. Мана сӳтсе ан яв. Ман пирки мар сăмах.

Антон. Тата кам пирки-ха?

Соня. Ача пирки каларăн-и ăна?

Антон. Мĕн каламалли? Вăл ун пирки тахçанах пĕлет.

Соня. Çырусем ун патне çитмессе те пултарнă.

Антон. Ăна килсессĕнех ача пирки пĕлтернĕ.

Соня. Çук, эп ĕненместĕп. Эс ăна юри нимĕн те каламан. Калама мар, эсĕ ăна курман та. Халь мана ху енне çавăрас тесе юри тем те пĕр шутласа калатăн. Пĕл: эс мана кирлĕ мар, мана вăл кирлĕ. Ма ятăм-ха эпĕ сана унта, хамăнах каймаллаччĕ. Куçран пăхса калаçнине мĕн çиттĕр.

Антон. Манăн сан шăпупа хуçаланас кăмăл пулман. Эс калаçнисене эпĕ ку таранччен хушнă пек пурнăçласа пытăм, хамăн, тен, урăхла тăвас килнĕ пулсан та. Курас килнĕ чух санпа тĕл пулаймарăм, сăмах хушас килнĕ чух чĕнеймерĕм, юратас килнĕ чух юратаймарăм. Пĕтĕмпех саншăн, сан кăмăлна хуçас мар тесе. Эс вара... Эс ялан ăна кĕтетĕн, мана вара...

Соня. Эп вăл килессине пĕлетĕп.

Антон. Эп те кĕтетĕп тен, ак ыран сан кăмăлу ман еннелле çаврăнĕ, тен, виçмине тесе... Анчах çич пĕлĕт çӳллĕшне çĕкленнĕ кайăк çунатсăр кайăк туйăмне пĕлмест.

Соня. Ан айăпла мана: чĕрене хушаймăн. Мана вăл кирлĕ, вăл кăна — нивушлĕ эсĕ ăнланмастăн? Хама çеç мар-çке, ачана та. Енчен те вăл пулман пулсассăн, тен, эп сан хыçранах кайнă пулăттăм хăть тĕнче хĕрне, анчах та халĕ... Халь пултараймастăп. Çав вăхăтрах сана та ман кӳрентерес килмест. Йывăр вăхăтра эс юнашар пултăн, ачашăн ашшĕ вырăнĕнче пултăн, çавна пулах ял çинче манпа танах сăмах та илтрĕн, мана шелленĕрен хăлхуна хупларăн.

Антон. Эс те шелленĕрен кăна çав мана хăв патна çывхартрăн. Шеллемелле марччĕ сан мана, тӳрех пистермеллеччĕ.

Соня. Ырă çынна еплле пистерĕн-ха.

Антон. Арçынна шеллемелле мар, ăна юратмалла е сивлемелле. Шеллени пăтратать. Пăтранчăк ăшĕнче вара никамăн та пурнас килмест.

Соня. Çапла, уçăмлăх кирлĕ. Хăть савăнтартăр, хăть хурлантартăр ун сăмахĕ — ман ăна илтмеллех. Эпĕ халех вĕсем патне каятăп.

Хĕр амăшĕ *(тепĕр пӳлĕмрен тухса)*. Ниçта та эс каймастăн.

Соня. Эс мана тытса чараймăн.

Хĕр амăшĕ. Кайсассăн кай ав ачупа пĕрле. Кай та ан таврăн — ак ман сăмах.

Соня. Эп юратап ăна.

Хĕр амăшĕ. Юрат ав сăпкара выртаканне.

Соня. Анне, ăнлан-ха...

Хĕр амăшĕ. Сăмах та ан вакла, сăмахсăрах пĕтĕмпех паллă. Таврăнни хăçанах, вăл сан тĕлне пĕлмест. Кунта юратни те, ачашăн çунни те курăнмасть. Эс ху суйласа илтĕн çакнашкал шăпа, урăххине йышăнас темерĕн. Халь те ав йышăнасшăн мар. Ухмах эс, хам пекех ухмах.

Соня. Эсир мансăрах ман шăпана татса паратăр. Çакăн пек пулса тухнăран ман чыс çеç мар, сăмахпа шухăшăн хакĕ те çук. Эп хаксăр хĕр. *(Антона.)* Ну, илсе кай мана хупа пĕрле, арăм ту. Манпа пĕр вырăн çине выртнипех телейлĕ пулăп тетĕн-и? Эп урăххи çинчен шутланă чух хăвна ху юратать-ха тесе суйăн-и? Санран çуралман ачана манранах тесе калăн-и? Çавăн пек хăвна ху улталаса ĕмĕрна ирттересшĕн-и? Е хăвах каламарăн-и шеллеме кирлĕ мар тесе?

Антон. Ку пурнăçра кашни утăмрах ултав. Эс те ак халĕ хăвна улталатăн. Тĕрĕс, ан шелле. Кай ун патне, эп сана тытмастăп. Эп саншăн никам та мар, эп ахаль çын çеç, иртен-çӳрен. Кай. Эп вара кĕтĕп... Кĕтĕп эс таврăнасса.

Соня. Ку санăн ирĕк. Эпĕ те кĕтетĕп.

Хĕр амăшĕ. Мĕн? Хăвăн инкекне-и? Вĕсем мĕнлине пĕлсе тăрса вĕт çав килеваскатăн. Пăх ашшĕ çине, пăх амăшĕ çине. *(Хушса.)* Кĕр те лар сăпка çумне. Лар та кĕт. Эс малтан йăнăш туни те ман чĕрере ларать.

Соня. Ма йăнăш пултăр эп ачана çуратасах тенĕ пулсан? Е йăнăшах тетĕр пулсан — ирĕк парăр ăна мана тӳрлетме. Ман шăпапа ан хуçаланăр. *(Каясшăн.)*

Антон. Соня, ан кай, эс ăна унта тупаймăн.

Соня. Ма? Ма ун пек калатăн?

Антон. Ыран килĕ. Ыран килетех. Килмесен хам çавăтса килĕп.

Соня. Ăна çавăтса килни кирлĕ мар мана, хăй килтĕр

е килместĕп тетĕр. Ыранччен вара... Ыранччен кĕтме манăн хал çук.

Антон. Вăл килĕнче мар.

Соня. Ăçта? Ăçта, килĕнче мар пулсан? Каласа пĕтер.

Антон. Кĕт ыранччен.

Соня *(çирĕппĕн)*. Ăçта вăл?!

Антон. Сирĕн кӳршĕре.

Соня *(урса)*. Çук, эс суятăн! Мĕн тутăр вăл унта? Кай тухса! Кай та ан таврăн, курам мар сана! Эс мана тавăратăн. Вăл унта килме пултарайман. Кала суяп тесе! Кала!

Хĕр амăшĕ. Мĕн тĕлĕнмелли кунта?

Соня. Эп ĕненместĕп сана. Ваня ун пек мар. Вăл юратать мана. Вăл пĕлет эпĕ ăна кĕтнине, эпĕ те, ачи те.

Тепĕр пӳлĕмре ача йĕнĕ сасă илтĕнет.

Хĕр амăшĕ. Кĕр ачу патне. Кĕр те унпа пĕрле макăр. Çапла вăл пурнăç: инкек курма çуралнă çын инкек курсах вилет.

Çутă сӳнет.

### Тăваттăмĕш картина

Таня килĕнче. Пĕр кĕтесре кравать ларать, ăна карăпа хупланă. Таня малтан кантăкран пăхса тăрать, кайран васкаса куçкĕски патне пырса хитреленме пуçлать. Ура сасси илтсен алăка пырса ярса уçать.

Таня. Кĕрĕр, кĕрĕр, эп кантăкранах эсир килнине куртăм. Никита, ан тăр алăк умĕнче, хăнана иртме пар. Кама-кама, анчах сана кĕтмен. Кĕтме те кĕтнĕ, анчах килет темен. Ирт, Ваня. Мĕнлерех пулса кайнă эс. Никита, кур, чăн-чăн арçын вĕт.

Никита. Эс тӳрех арçынлăха туясшăн. Хăна тетĕн пулсан, хăнана малтан хăна тăвас пулать, кайран вара...

Таня. Мĕн тумаллине эс каламасăрах пĕлетпĕр-ха ăна, курса тăранма пар. Е хăналанса тăранаймарăн-им? Илтĕнчĕха шăв-шав, касă тепĕр вĕçĕнче пурăнсан та. Япăхах мар шавлаттăрчĕ.

Никита. Шăв-шав тума ăста эпир.

Таня. Иккĕленместĕп, эс шавлама юратнине пĕлетĕп. Анчах вăраха кайсан шав та йăлăхтарать. *(Сĕтел çине çимелисем тата эрех кĕленчи кăларса лартать.)* Ман килте туни кăна.

Никита. Чиксе хур, паян эпир сана хамăр хăна тăватпăр. *(Эрех кĕленчи кăларса лартать.)* Парне вара ан кĕт, мĕн пуррипе çырлах.

Таня. Мĕне кирлĕ мана санăн парнÿ. *(Ваня çине кăтартать.)* Ак вăл парне, тек ним те кирлĕ мар. *(Ваньăна çупăрлать.)*

Никита. Ну-ну, ан ĕрĕхтер.

Таня. Ĕрĕхтерсех телей килет пулсан — ĕрĕхтермесĕр епле чăтăн. Ваня, ан итле пире, ухмахсене. Йыснуна пушшех те ан итле. Вăл сана çавна вĕрентĕ, кайран çăвăнса та тасалаймăн.

Никита. Тасаласси килмесен вара мĕн тумалла? Эс ак тасалас теместĕн вĕт.

Таня. Манпа мĕн танлаштаран, эп... Эх, Никитушка, санпа эпир... Эс нихăçан та шутламан-и, мĕн пулнă пулĕччĕ-ши пурте пирĕн пек пулсан?

Никита. Ырлăх.

Таня. Ырлăх? *(Ахăлтатса кулать.)* Куççульлĕ е куççульсĕр?

Никита. Пурпĕр мар-и? Чунра çеç лăпкă пултăр. Касçерен сив тар та ан вăраттăр, сивĕ куççем те ан шăтарччăр тата пĕр чĕптĕм те пулин шанăç пултăр пурнăçри тĕллевĕн. Унсăрăн мĕн усси кун кунланин?

Таня. Усси пуртан кунне кунлатпăр пуль. Çынсем ĕмĕчĕсенче пире тахçанах леш тĕнчене ăсатнă пулĕ те, эпир ак пурăнатпăр-ха. Савăнатпăр та, вăрçăнатпăр та, кулатпăр та, йĕретпĕр те. Тĕллев вара... Те шутлатпăр ун çинчен, те шутламастпăр.

Никита. Шутлаттарать çав.

Таня. Эс хăвăн тĕллевне вунă çул каяллах ту хушшинче çĕтсе хăварнă-ха.

Никита *(сасартăк Таньăна кăкăртан ярса илет)*. Кун пирки вара шăлна хытăрах çырт! Сан ĕç мар!

Ваня *(чарса)*. Йысна! *(Никита Таньăна вĕçертет.)*

Таня. Çук-çук, Ваня, нимĕн те пулман. Эп ним те каламан, эсир илтмен.

Никита. Эпĕ ыйтман мана унта яма, эпĕ ыйтман ман чуна лăскаса кăларма, эпĕ ыйтман...

Таня. Ыйтман, ыйтман, лăплан. Никам та унта ыйтса кайман. Ыйтмасăрах хуçаланаççĕ пирĕнпе. *(Ваня çине тĕллесе.)* Е вăл ыйтса кайнă-и? Эп илтнĕччĕ-ха, вăл та вутра çуннă.

Никита. Мĕн вăл вут? Ăна сÿнтерме пулĕ, ăшри вута вара...

Таня. Эппин, чăт. Чăтма йывăр пулсассăн — макăр.

Никита. Ху макăр.

Таня. Сан вырăнна-и е арăму вырăнне? Кала, сисе ярасла ан пăхтăр ман çине, тав тутăр вăл тÿсес чухне ун

вырӑнне эп тӳснӗшӗн, урнӑ упӑшкине лӑплантарса пурӑннӑшӑн.

Никита. Мӗн тӑвар ӗнтӗ эсӗ тӳсме кӑмӑллан пулсан.

Таня. Эх, Никита, калӑттӑмччӗ те пӗрре вирлӗ кӑна...

Никита. Ан кала ҫав.

Ваня. Эпӗ тухса кӗретӗп.

Таня. Ҫук, ан тух. Туртас тетӗн пулсан, кунтах турт. Эс ан итле пире, эпир ухмах ҫынсем. Пире халь тин ӑслӑ пулни килӗшмест те. Эп паҫӑр сана кӗтрӗм терӗм. Эс ан шутла арҫынлӑхна туйса курассишӗн кӗтнӗ тесе. Пӗлетӗп: эс ун пек шутламастӑн. Тепӗр тесен, шутласан мӗн, кама мӗн ӗҫ? Эп сана ырӑ ҫын пулнӑран кӗтрӗм. Хӑв манӑн ҫурта кӗнипех, пирӗнпе ларнипех мана чыс тунӑран. Саншӑн ку ним те мар, маншӑн вара... Ухмахсем эпир. Пирӗн ҫумра сан пекки пулмасан пӗтмеллипех пӗтетпӗр эпир.

Никита. Пӗтмелле чухлӗ пӗтнӗ ӗнтӗ.

Таня. Ҫитет, Никита, калаҫар мар тек кун ҫинчен.

Никита. Тӗрӗс, калаҫар мар. Ҫуркунне ҫитрӗ, ҫут ҫанталӑк вӑранать. Тӗнче вутра ҫунать-и, арканать-и — ҫуркунне ҫитсен тавралӑх пурпӗр чӗрӗлет. Турпас та ав турпас ҫине ухать. Юратап ҫуркуннене, чуна сиплет вӑл.

Таня. Эс вара чун тулса килчӗ тесе тарӑхан. Пурӑнма пӗлес пулать, Никита. *(Никита хулпуҫҫийӗнчен уртӑнать.)*

Никита. Чее эс, йӗкстӗк. Мӗн кӑна хӑтлантармастӑп эп сана, хӗнетӗп те хутран-ситрен. Эс пур — ман еннех туртӑнан. Мӗншӗн?

Таня. Хӑвӑнтан ыйт.

Никита. Хам та ҫавах ҫав. Пӑвса пӑрахас килет ман сан пеккисене, хам вара пӑвас чухне ачашлама пуҫлатӑп. Ваня, эс курмӑш пул. Ҫук, юратмастӑп эп ӑна, эп акунах юрататӑп, аку вара мана ӑнланмасть, ӑнланас темест. Тен, ӑна юратнипех эп ҫакӑнта килетӗп те. Кунта килсен шалта тулса килни тухса каять. Сана та ҫав шутпах илсе килтӗм кунта. Сипле чунна, паян ӑна сана паратӑп. *(Таньӑна.)* Эс ан турткалан, эс хӑвӑн ӗҫне пӗл. Хӗрарӑмӑн хушнине тумалла, шӑпи ун ҫавнашкал.

Таня. Ан хисте ӑна. *(Ваньӑна.)* Ӗҫсем манпа пӗр курқаран. Никита, эс ӗҫетӗн-и?

Никита. Эп — пас.

Таня *(Ваньӑна.)* Эп ӳсӗртес шутпа мар, пуҫна ҫавӑрас тесе те мар, кӑмӑлшӑн ӗҫсе пар.

Ваня *(ӗҫет)*. Йӳҫӗ.

Таня. Пултӑр йӳҫӗ, эпир ачасем мар. Ачана пылак кирлӗ, йӳҫҫине туйсассӑнах писет. Пире вара... Тепӗр тесен, эс те ача кӑна-ха, шухӑшу ҫеҫ ачанни мар. Васкаса

çитĕнтерет ачасене пурнăç. Манăн та ав ăса кĕчĕ те — килтен тухса кайрĕ. Ма нумай шутлатăр-ши эсир? *(Йĕрет.)*

Никита. Ан макăр, таврăнать вăл.

Таня. Таврăнать, асту. Сана пула та тухса кайрĕ вăл.

Никита. Сан ямалла марччĕ, мана хăваламаллаччĕ.

Таня. Хăваланин мĕн усси, çĕмĕрсе те пулин кĕреттĕн.

Никита. Эс кĕртмен пулсан эп тахçанах кăнса выртаттăм. Ан хуйхăр, ÿссе çитет, ак салтакра пулать, пурнăç нушине тутанать, вара таврăнать.

Таня. Манран вăтанчĕ, намăсланчĕ вăл, тен, ăшĕнче ылханчĕ те пуль. Паллах, ман пек аннене анне теме йывăр. Анчах мана та ăнланма пулать-çке. Тен, эп те хама хам ылханатăп çутă кун курнăран та, ывăлăма тухса кайма сăлтавне тунăран та. Кунашкал марччĕ ман та пурнăçри тĕллев, вăл урăхлаччĕ. Юратрăм эп пĕрне, юратнипех çуратас терĕм, вăл ача пуласса пĕлчĕ те — тепĕр хĕр патне кайрĕ. *(Йĕрет.)* Ахă çине пăхсан Турă мĕн çырнине йăлтах пĕлме пулать теç. Мĕскер пытаннă-ши ик ал тупанĕнче? Ăçта инкекĕ, ăçта телейĕ? Кам пайлĕ вĕсене манпа?

Никита *(эрех кĕленчи тытса)*. Ак çакă. Пурне те юратать вăл. *(Ваня ура çине тăрать.)* Эсĕ каясшăн-и?

Ваня. Пĕлетĕн-и, ăçта каяс килет манăн, йысна? Тĕнче хĕрне, никам та çук çĕре. Е аркатас килет çак пурнăçа кайран веç çĕнĕрен тума.

Никита. Çăтмах-и? Аçу каларĕ вĕт çăтмах ăçтине. Эп çылăхлă, мана çăтмах кирлĕ мар. Çылăхĕ илĕртÿллĕрех, магнит пекех туртать, сиплет те. Ак сипленетĕп те пурнатăпха татах пурнăçри тĕллеве кĕтсе. Тĕллевĕ кăна пурнăçлантăр.

Ваня. А мĕн тĕллев? Вăл тĕрлĕ. Халь пĕр тĕрлĕ, кайран пач урăх тĕрлĕ. Çын улшăнать, улшăннăçем тĕллев те улшăнать.

Никита *(Ваньăна)*. Сан ача пур хăть.

Ваня. Вара мĕн? Хам çеçĕпе, автоматпа туслашрăм тăк, ăна та вĕсемпе туслаштармалла тесшĕн мар пуль те эс? Çук! Ун пулĕ урăхла шăпа. *(Каясшăн.)*

Таня *(Ваня патне чупса пырса)*. Çук, ан кай, вăл кайтăр. Çук, вăл та, эс те юл. Ман сана куç умĕнчен тартас килмест. Çук, эс пирĕн пек ан пул, эс урăх пул. Мĕн эпир?! Эпир юлашкисем анчах. Эсĕ çын пул. Пĕлместĕп мĕн каламаллине те, ман ырă çеç сунас килет сана. Хăвăн нушуна пĕччен ан юл. Ман пуçа таяс килет сан умăнта. *(Кукленет те Ваньăна урисенчен ыталать.)*

Ваня. Кирлĕ мар, тăр, Таня акка.

Таня. Таня акка? *(Ахăлтатса кулса ярать.)* Акка тесе эс мана вăйсăр хăвартăн. Вĕрен, Никита, çынна пĕр сăмах-

па ҫапса хуҫма пулать... Эх, Ваня, Ваня, ырӑ ҫын. *(Ваньӑна ыталать.)*

Никита. Эпӗ пирус туртса кӗреп. *(Тухать.)*

Кӑшт тӑрсан васкаса Антон килсе кӗрет.

Антон. Ваня, эпӗ сан пата.

Ваня *(юри илтмӗш пулса Таньӑна)*. Мӗнле ҫӑмӑл чунра санпа юнашар чух. *(Таньӑна антӑхса кайса ачашлама пуҫлать, кайран вырӑн ҫине илсе кайса вырттарать.)* Юн чуппине туятӑн-и? Ун ҫулӗ тӑвӑр пулмалла,васкать, васкать, урӑх ҫулсем шырать. Ҫулӗсем вара... Ӑҫта кайсассӑн та чӗре пӗрре кӑна-ҫке.

Таня. Ваня, ил аллуна... Ай!

Ваня. Ан тив,васкатӑр, ма чарас? Кирлех пулсан тула та тапса тухтӑр. Пашкаса сывлани, шӑнӑра хытарни, хыттӑн пӑчӑртанни, шалти хӗрӳлӗх — ак вӑл канӑҫ. Е килӗшмест-и кунашкал пурнӑҫ? Шӑв-шавлӑ пурнӑҫ илӗртерех парать-и?

Таня. Ваня, тӑр, пирӗн пата ҫын килнӗ. Эс ухмаха ернӗ. *(Антона кӑшкӑрса.)* Ма килтӗн эс?!

Антон *(Ваня илтмелле)*. Пӗлетӗн-и, ма кураймастӑп эп хама? Хӑюсӑр пулнӑшӑн. Уччен, эс салтака кайиччен, сан мар, ман маларах Соньӑна хам ытама илсе сан пекех ӑна...

Таня *(Антона)*. Мӗнле пултаратӑн эс ҫакна пӑхса тӑма?!

Ваня. Куҫна та, хӑлхуна та хупла, анчах аллуна тӑс. Юлташ тӑшман ан пултӑр, тӑшману юлташа ҫаврӑнтӑр.

Антон. Чарӑнатӑн-и эсӗ паян?!

Ваня. Килӗшме пулӗ ал тӑсманнипе те, пурнӑҫ ҫине веҫех йӑвантарар. Анчах пӗр хӗрсе кайнӑ чух юн чуппине чарма май ҫук.

Антон *(кравать каррине яриех сирет)*. Ҫитет сана ҫынран кулса!

Ваня *(Таньӑна)*. Ма йӗретӗн? Ан йӗр, йӗрсе ма ҫынсене савӑнтарас. Савӑнмасан та пурпӗр вӗсем илтмеҫ эсӗ ӗсӗкленине. Илтсен те чун ыратнӑран йӗмест, киленнипе ҫеҫ куҫҫульленет тейӗҫ.

Антон *(Ваньӑна)*. Ҫур сӑмахранах эпир санпа пӗр-пӗрне ӑнланаттӑмӑр, халь эп сана пачах та ӑнланмастӑп.

Ваня *(Таньӑна)*. Е йӗр, ун пек ҫӑмӑлтарах пулсассӑн. Тӗрӗс, йӳҫӗ мар, пылак вӑл пурнӑҫ, ырлӑхра эпир, куҫҫулӗ те пылак. *(Антона.)* Туйса курас килет-и куҫҫулӗн пылакне? *(Антон чӗнмест.)* Сан ирӗк.

Антон. Ҫапла, ман ирӗк. Ирӗк кашнин пур, анчах пӗр мар. Ман ирӗкӗн чаракӗ пур, сан ирӗкӳ хӑвӑнтан та аслӑ. Эс мар унпа, вӑл санпа хуҫаланать. Чар хӑвна, мана та чар.

**Ваня.** Чармастăп. Ирĕк — пурнăçăн тĕшши, телейпе тан. Ма-ха ăна чарас?

**Антон.** Телей... Санран эп вăйлăрах пулсассăн кăтартнă пулăттăмччĕ-ха телей мĕн иккенне, ислетĕттĕм лайăх кăна. Эс вăйлă, ман çине шеллесе пăхан, эп мĕскĕн саншăн. Çук, эпĕ вăтанмастăп кунщăн. Теприне телейлĕ тăвассишĕн мĕскĕн те, ыйткалакан та пулăттăм, килсĕр, выльăх шайĕнче те пурăнма хирĕç пулмăттăм. Ма кирлĕ кил телейĕ пулмасассăн? Ма çукшăн татăлас ик алă, пĕр чĕре пулсассăн? Ма тĕссене пăтраштарас хура тĕс пурпĕр шурă пулас çуккине пĕлсессĕн? Ирĕке пула-и?

**Таня.** Хури, шурри, хĕрли, сарри... Тĕссем нумай, пурнăçĕ çак кăна. Ма килтĕн эс, пире тĕс кĕртме-и? Сан малтан ыйтмаллаччĕ, тен, пире хамăр тĕс килĕшерех парать.

**Антон.** Эп ĕнеместĕп килĕшме пултарнине.

**Таня.** Эп ĕненетĕп эсĕ ĕнейменнине. Алăк уçă.

Никита вирхĕнсе кĕрет, вăл тÿрех Антона кăкăртан ярса илет.

**Никита.** Каларăм вĕт сана унта ан кĕр тесе. Тата мĕнле каламалла сана, ак çапла-и? *(Антона çапса ярать, Антон ÿкет. Никита ăна татах çĕклесе тăратса çапса ярать.)* Урăхла ăнланмасна?

**Таня.** Никита, чарăн!

**Ваня.** Яр ăна, йысна!

**Никита.** Патак ачи вăл. Ак ме сана! *(Антона тапать. Ваня Никитăна ярса илсе çапать, Никита пĕр кĕтесе кайса тăрăнать, юхса аннă юнне шăлса илет.)*

**Ваня.** Хĕнес тесен мана хĕне, ăна ан тĕкĕн!

**Никита.** Эс мана уншăн-и, ăна пула-и? Эп кунта саншăн тăрăшса... Эп йăнăшнă иккен. Ислетмелле, тĕшĕрмелле сире пурне те! *(Ваня çине siксе ÿкет, çапăçаççĕ.)*

**Таня.** Никита, чарăн! Ваня! *(Антона.)* Ну, мĕн пăхса тăран? Вĕлеретĕр вĕт пĕр-пĕрне!

**Никита** *(Таньăна)*. Эс вара... Сана пăвса пăрахмалла.

**Таня.** Пăвăнăпăр-ха çын пăвмасан та. *(Антона.)* Эс кай, тек курам мар сана кунта. Пире курсан аякран тар.

**Антон.** Эп таркăн мар. Вĕçĕ çакăнта пулăр. Куçăм уçăлчĕ, сирĕлчĕ тĕтре. *(Ваньăна.)* Эпĕ эс таврăнсан аякка пăрăнма хатĕр тăраттăм, халь пăрăнмастăп. Эс тек ман юлташ мар.

**Ваня.** Ан васка мана тăшман шутне кĕртме. Халĕ кай. Кай терĕм сана! *(Антона чышса кăларса ярать.)*

**Таня.** Атьсем, мĕн пулса иртет сирĕнпе?

**Ваня.** Веçех йĕркеллĕ. Пурнăç малалла шăвать.

Чаршав

# ИККĔМĔШ ПАЙĔ

## Пиллĕкмĕш картина

*Пĕррмĕш картинăри курăну. Пÿрт умĕнче Амăшĕ ларать. Кăшт тăрсан Ваня килет.*

Амăшĕ. Эс кайнине сисмен те эп. Ăçта кайнăччĕ эс?

Ваня. Лесхоза.

Амăшĕ. Ĕç пирки пуль-ха.

Ваня. Малтан ĕçленĕ цеха вырнаçасшăнччĕ, илесшĕн мар. Çĕнĕ пуçлăх унта, ĕç çук тет.

Амăшĕ. Çамрăксем ĕççĕр çав халь ялта. Эс апатланмасăрах кайнă. Фая вĕлтĕрен яшки пĕçернĕччĕ, кĕр, антарса парĕ.

Ваня. Çиес килмест ман.

Амăшĕ. Çын сăмахне çывăха ан ил эс, ху пĕлнĕ пек пурăн. Çын ырринчен ытла усал сунать. Эп Соня пирки-ха, лайăх хĕр вăл.

Ваня. Лайăх.

Амăшĕ. Халь çăва тухрăмăр, тулта та çĕр каçма пулать, кам пăлтăрта, кам лупас çинче. Аçу та Чĕлĕме кĕтÿ кĕтме кайсан пÿрт янтă пулĕ. Илсе килмеллеччĕ пуль Соньăна ачипе пĕрле. Ма чĕнместĕн? Килнĕренпе курса калаçрăн-и хăть унпа?

Ваня. Ман военкомата çитсе килесчĕ. Автобус миçере пулать-ши вăл енне?

Амăшĕ. Военкомата? Ҭатах-и? Мĕн тума? Тем пулса иртет санпа, ачам. Шухăшусем ытла пăтранчăк, пĕччен ан юл вĕсемпеле.

Ваня. Çул çине тухсан машина та пулĕ-ха.

Амăшĕ. Пулĕ-çке, пулĕ. *(Йĕрет.)*

Ваня. Анне, ан йĕр.

Амăшĕ. Килтен кашни каймассерен яланлăхах каяссăн туйăнатăн. Ман вĕт халь шанчăк та эсĕ кăна. Куç пек кĕтрĕм эсĕ таврăнасса, халĕ татах мана аçупа пĕрле пăрахса хăварăн-и, ачам?

Ваня *(Амăшĕ умне кукленет)*. Анне, эс веçех пĕтсе кайнă.

Амăшĕ. Вилмелле кăна та, пурăнатăп-ха ак сире чăрмантарса.

Ваня. Вилесси çинчен ан шутла.

Амăшĕ. Тепĕр чухне пурăннинчен вилме çăмăлтарах. Эсĕ те ак... Турă упратăрччĕ сана. Пуç усăнсан ачу çинчен аса ил хăть, урлă тăракан çын пулсан...

Ваня. Çук, уншăн мар. Темле пурнăç ку: вилес килмесен вĕлерессĕ, пурăнас килмесен пурăнмах тивет. Пур çĕрте

те чиркӳсем ҫёкленеҫҫё, турри вара унта вырнаҫас чух тарать пулас аяккарах.

Амӑшӗ. Ёненменнипе вӑл сана тарнӑн туйӑнать, ырӑпа усала пӑтраштарнипе.

Ваня. Епле пӑтраштармӑн-ха усалӗ ыррин хыҫӗнчех пытанса тӑрать пулсан.

Пӳртрен Фаина тухать, вӑл чӑматан йатнӑ.

Фаина. Анне, эпӗ каятӑп.

Амӑшӗ. Ӑҫта?

Фаина. Хулана, киле.

Амӑшӗ. Кӗрӳ вара?

Фаина. Пӗлместӗп. Хӑть мӗн тутӑр, маншӑн пурпӗрех.

Амӑшӗ. Арлӑ-арӑмлӑ ҫынсем пӗр-пӗриншӗн пурпӗр пулмалла-и вара?

Фаина. Пулмалла мар пуль те... Саншӑн та атте мӗн тусан та пурпӗрех-ҫке. Халь Ваня таврӑнчӗ, халь...

Амӑшӗ. Эсир пӗри те ытлашши мар мана. Хӑть упӑшкуна кӗтсе илмеллеччӗ.

Фаина. Вӑл ӑҫтине пӗлместӗп эпӗ, те хӑй те пӑрахса кайнӑ. Ёнерех Асанкассине пӗрисем патне пӳрт ӑшӑтакан пӑрӑхсем кӗртсе вырнаҫтармаллаччӗ тесе тухса кайрӗ те — ҫухалчӗ. Те унтах ҫывӑрнӑ, те... Пурӑнни мар ку пирӗн, анне, манӑн хал ҫук тек кун пек пурӑнма.

Амӑшӗ. Эсир килтен тухса кайнине куриччен вилсе кӑна выртасчӗ манӑн. Кайсассӑн пуҫӗпех каятӑр вӗт эсир. Аҫу та ҫав!.. Чӗлӗм ҫырминчен те ӳксе вилмерӗ, хӑйӗн ҫӗҫҫи айне те пулмарӗ. Ӑна пула пӗтӗм ҫемье саланчӗ.

Фаина. Мӗн халь вилни? Эпир ача чухнех вилсе выртмалла пулнӑ унӑн. Е ҫуратмалла та марччӗ сан пире. Мӗн усси сакӑр ача ҫуратни пӗрин те чӗптӗм телей ҫук пулсан. Вӑл ӳсӗр чух хӗлӗн-ҫӑвӗн урамра ҫӗр каҫаттӑмӑр. Кӳршӗсем патне те, юлташсем патне те ҫӗр варринче ялан шаккаса кӗрес килместчӗ, вара йӗпе-сапара та, шартлама сивӗре те — е лупас айӗнче, е сивӗ мунчара. Ӑҫтан хӗр ача пӑсӑлмасӑр юлтӑр? Халь акӑ хӗсӗр арӑм, хӗсӗр арӑм теҫ. Хӗсӗр пулӑн унта шӑмӑ таран шӑнсан. Хам ачаллӑ пулнӑ пулсан ҫавӑн пек хӗн кӑтартнӑ пулӑттӑмччӗ-и эп ӑна?

Амӑшӗ. Ҫуралтӑр ҫав. Пиллӗкӗн ӳсни — улттӑш те ӳсӗҫ, улттӑн ӳсни — ҫиччӗмӗш те ҫитӗнӗ, саккӑрмӗш те ытлашши пулмӗ тенӗ. Аҫунтан пулмасан, Юрик ҫитӗнсе ҫитсен вӑй илӗпӗр те ҫын пекех пурӑнма пуҫлӑпӑр тенӗ. Вӑл вара ҫитӗнсе ҫитрӗ те чӗрепе чирлесе...

Фаина. Ку килте пурӑнса пурте пӗтетпӗр-ха. Ваня, йыс-

ну тӗрӗсне калать. Кай куитан, чуну ӑҫта выртать, ҫавӑнта кай. Анне хамӑр илсе кайӑпӑр. Хваттере ик ҫуллӑха пӗр ҫемьене парса хӑварнӑччӗ кӑштах укҫа пулӗ тесе. Вӑхӑчӗ ҫитмерӗ те-ха, кайса калап, урӑх ҫӗре куҫчӑр. Тата... Соньӑна эп кураймӑп, кала, каҫартӑр вӑл мана. Эп ӑмсаннипе... Хулари сиенлӗ сывлӑша пула ача пулмасть пуль тенӗччӗ, ялта хӑть пӗр-икӗ ҫул пурӑнса пӑхар тенӗччӗ. Сывлӑш айӑплӑ мар иккен. Ача ҫураличчен ача валли япала илме каламаҫҫӗ, илнӗччӗ ҫав. Мана вӗсем тек кирлӗ мар. Ме, кайса тӑхӑнтарт вӗсене хӑвӑн ачуна. *(Пӗр тӗрке Ваньӑна парать.)*

Амӑшӗ. Фая, ан кай.

Фаина. Анне, ан татӑл, курнӑҫӑпӑр-ха. Сана илме килетӗп эпӗ.

Амӑшӗ. Мӑнкунччен хӑть тӑр.

Аякра Никита кӑшкӑрса килет.

Никита. Ваня! Ваня! Ваня, атя кайрӑмӑр!

Ваня. Ӑҫта?

Никита. Вӗлереттпӗр иккӗшне те, ҫитет хамӑртан култарса.

Амӑшӗ. Мӗн пулнӑ вара?

Никита. Пӗрлешеҫҫӗ кӑвакарчӑнсем. Мӗнле чӑтса тӑратӑн эс ҫак мӑшкӑла? Сан вырӑнта пулнӑ пулсан эп вӗсене... Атя!

Ваня. Ниҫта та каймастӑп эпӗ.

Никита. Вӗсем пӗрлешме шут тытнӑ, ӑнланатӑн-и эсӗ ҫакна? Пӗрлешме! Ниҫта кайса кӗрейми васка-васка хатӗрленеҫ, Мӑнкун кунне туй тет.

Ваня. Пӗрлешчӗр, мана мӗн ӗҫ?

Никита. Мӗнле «мӗн ӗҫ»? Мӗн калаҫатӑн эс?

Ваня. Хӑвар вӗсене, мана та хӑвар. Хӑвӑра пӗлӗр! Мӗн пурӑнни эсир?! Пурӑнни-и ку?! Хамӑр та пурӑнма пӗлместпӗр, ҫынсене те пурӑнма памастпӑр.

Никита. Ну, пӗлетӗн-и эс...

Ваня. Эп пулӑттӑмччӗ суккӑр та хӑлхасӑр, хам пурнӑҫа та парӑттӑм, енчен те ку... Лере эп ылханаттӑм хӗҫ-пӑшал шутласа кӑларакана, халӗ вара... Автоматран персе ҫак тӗнчене тепӗр май ҫавӑрма пултарайсассӑн, тытӑттӑмччӗ те эп ӑна... Хам пӗтӗттӗм, анчах тӗнчене вырӑна лартӑттӑм. Мӗн эп пӗтни?! Мӗн пӗр ҫын вилни?! Мӗн вӑл вилӗм?! Вӑл ҫӑлӑнӑҫ кӑна: асапран, хаярлӑхран, ҫӑткӑнлӑхран... Анне, эпӗ лере нумай юлташ ҫухатрӑм, нумай ҫынна вӗлертӗм. Эп хӑнӑхрӑм ҫав вилӗме, мана та вӑл хӑнӑхрӗ, хӑпмасть, хыҫран ҫӳрет. Ан кайӑр, юлӑр, пулӑр аннепе,

кайсассӑн ӑна та илсе кайӑр. Ман вара тӗнче лере, ман каймалла.

Никита. Лӑплан, хӗрсе ан кай. Иртет ку сан.

Ваня. Хӑҫан? Ху ҫине ҫавӑрӑнса пӑх. Сан халӗ те иртмен.

Никита. Ман пурнӑҫ урӑхла, шӑв-шавлӑ, юратусӑр, ача та ҫук, санӑн вара... Ҫумна автомат пӑчӑртиччен хӑв ачуна пӑчӑртама васка. Сан шанчӑк пур, уншӑн мӗнле те пурӑнма пулать, манӑн вара... Апай, эс нумай куҫҫуль тӑкнӑ, анчах арҫын макӑрнине курман-тӑр. Арҫын та макӑрать, анчах хӗрарӑмӑнни пек мар унӑн куҫҫулӗ, ытла та йывӑр вӑл, тӑхлан пекех. Пӗтӗм юн тымарне туртса, чӗрене ҫурмалла ҫурса пӗрчӗн-пӗрчӗн пӑчӑртанса тухать. Хӗрарӑм вара ӑнланмасть ҫакна, ӑна халь лайӑх пултӑр. *(Фаинӑна.)* Хӑваласа яр мана, хӑваласа яр! Эп тупӑп урӑх арӑм, эс — урӑх упӑшка. Тен, ҫавӑн чух телейлӗ пулӑпӑр. Эс ҫуратмасан, тен, тепри ҫуратса парӗ. Хӑваласа яр мана!

Фаина. Чарӑн, мана эс кирлӗ. Эп сана юрататӑп.

Никита. Юратакан ҫынсем пирӗн пек пурӑнмаҫҫӗ, юратакан ҫынсен куҫӗ тулли телей ҫиҫет.

Фаина. Пирӗн те пулӗ-ха, тата кӑштах кӗтер.

Никита. Мӗн тери юрататтӑмччӗ эпӗ сана, эс вара мана ӑнланманнипех пӗтертӗн вӑл юратӑва, нимӗн те юлмарӗ. Сивӗ куҫсем кӑна тата сив стенасем. Мӗне кирлӗ вӗсем мана, пӑрланнӑ чӗрене тата пӑрлантарма-и? Атя хваттере сутатпӑр та Мускава сипленме каятпӑр. Нимсӗр юлар, ача ҫеҫ пултӑр.

Фаина. Никита, каҫар мана. *(Йӗрет.)*

Ваня кайма тӑрать.

Амӑшӗ. Ваня, ӑҫталла эс?

Ваня. Ниҫта та.

Никита. Кайтӑр, апай, таврӑнать вӑл.

Фаина. Юрӗ, Мӑнкун иртиччен тӑрар. Атьӑр пӳрте.

Пурте кӗрсе каяҫҫӗ. Ҫутӑ сӳнет.

## Улттӑмӗш картина

Виҫҫӗмӗш картинӑри курӑну. Ваня кӗрет. Тепӗр пӳлӗмрен Хӗр амӑшӗ тухать.

Хӗр амӑшӗ. Ма килтӗн?

Ваня. Ачана курма.

Хӗр амӑшӗ. Санӑн нимле ача та ҫук, пулман та. Кай кунтан, ку ҫула ман, вӑл саншӑн ют.

Ваня. Ӑна курмасӑр эп каймастӑп.

Хĕр амăшĕ. Ан тертлентер ыр çынсене, мана та çылăха ан кĕрт. Кай хăвăн çулупа, тĕнче аслă.

Ваня. Маншăн тăвăр. Çулсен йышĕ те çук, пĕр çул кăна.

Хĕр амăшĕ. Мана паллă вăл çул.

Ваня. Ан хăра, хĕрне хам хыççăн илсе каймăп.

Соня *(тепĕр пӳлĕмрен тухса)*. Атту эп кайăп терĕн-и? Пит кирлĕ эс мана!

Хĕр амăшĕ. Ма тухрăн?!

Соня. Вăл юри килнĕ, ăна нимле ача та кирлĕ мар, ăна курас тесе килмен вăл. Мĕн тутăр вăл унпа? Курас текен çын малтанах килет. Вăл вара çĕнĕ хыпар илтсен мана тĕрĕслес тесе килнĕ, ман шухăша пĕлме. Тен, каччă каймĕ, тен, ман мăйранах пырса уртăнĕ тенĕ. Пĕл çакна: эпĕ каччă каятăп, ку татăклă, халь тин мана никам та чараймасть. Пурте эс мар, пурте мăшкăл тумаççĕ, юратакан та пур.

Ваня. Эп иккĕленместĕп кун пирки. Эп сана ӳкĕтлеме килмен.

Соня. Ах, вăл иккĕленмест. Ну, паллах, юратма юратакан ма иккĕлентĕр. Вăл кашни хĕр кăмăлне тупма пĕлет, ӳкĕтлеме те кирлĕ мар. Кай ав кӳрше, юрат ăна, вăл саншăн пуринчен те хаклăрах!

Хĕр амăшĕ *(Соньăна)*. Кĕр халех ачу патне. *(Ваньăна.)* Эс вара кай.

Соня. Çук, анне, ан кайтăр, каласа пĕтертĕр. Ма килтĕн? Тен, саламлама? Мана е ачуна? Мана пулсассăн ан тертлен, сан шухăшу мана интереслентермест. Ачуна пулсан сăмахна кала, ăнланакан пулсан каланă сăмахна пĕлтерĕп. Мĕн тес ăна? Аннӳне юрататăп тесе суйрĕ, эс çуралтăр терĕ, çуралсан вара сана йышăнмарĕ, аннӳне питренех сурчĕ тес-и? Е куçран пăхсах пиртен кулма килтĕн-и? Ĕç тухмĕ! Пуш сăмаха чăн сăмахран эп уйăрма вĕрентĕм. Тен, каçару ыйтасшăн эс? Ăçта унта! Вăл паттăр-çке, айван çын мар, мĕскĕнленмест.

Ваня. Эп ним пирки те сăмах уçмарăм.

Соня. Ма çăвар уçас? Çăвар уçмасăр шухăша пĕлтерме çук-и? Сăмахĕ йывăр-çке, епле шалтан туртса кăларăн. Туртса кăларсан та кайран илтекенни ӳпкелеме пултарĕ, çапла каларăн тейĕ. Капла мĕн? Капла вăл тап-таса, вăл нимĕн те темен, ун çылăх çук. Эпĕ çеç çылăхлă, вараланчăк. Эп чыссăр çын, вăл паттăр!

Ваня. Çапла, эп ăнланса илтĕм ку пурнăçа, ун йĕркине, ун тĕшшине, кам мĕне тăнине. Малтан эп ун пек ăнланман. Эпĕ çеç пурăнмастăп çĕр çинче, эсĕ çеç те мар. Пур урăххи, хамăртан та асли. Эпир пĕр-пĕрне юратни е ултавлани — вĕсем пурнăçăн тĕсĕсем кăна.

Соня. Тĕсĕсем вара пурăна киле ылмашăнаççĕ — çакна каласшăн пултăн-и? Ма халиччен тăсса тăтăн? Тӳрех каламаллаччĕ тек юратмастăп тесе, эс мана кирлĕ мар тесе. Тепĕр тесен, каларăн-çке çапла килнĕ кунах. Сăмахпа мар, сăмахсăр ăнлантартăн.

Ваня. Эс йăнăш ăнланан мана. Çапла, ăнлантарма сăмах çитмест ман. Суйма юратакан çын мар эп, чăнлăх еплине те пит курсах каймастăп пуль. Вăхăт иртсен, тен... Çук, мана ан пăх, качча тух, ача телейĕ пурнăçăн тĕллевĕ пултăр.

Соня улаха йĕрсе ярать.

Хĕр амăшĕ. Кама çавăртăн эсĕ ăна? Нивушлĕ нимĕн чухлĕ те шеллеместĕн эс пире? Кай.

Соня *(йĕме чарăнса).* Ан савăн, саншăн йĕместĕп эп. Эс маншăн текех çук.

Ваня. Çитĕ тертленсе, каламалли манăн тек çук. Сăмахĕ йывăр, чăн каларăн. Тата илтсех каймастпăр та пĕрне-пĕри. Шел çакăн пек пулса тухнăшăн.

Соня. Шел? Сана шел-и? Сана шел мар! Шел мар хăвна та, ыттисене те. Ан суй, эс шеллеме пĕлместĕн, эс тĕп тума кăна пĕлен. *(Çупа-çупа ярать.)* Кай!

Хĕр амăшĕ. Кай, ачана курмасан хăвна та çăмăлтарах пулĕ. Вăл сана ан пĕлтĕр, эс — ăна.

Ваня. Каçарăр мана. *(Тухса каять.)*

Соня. Кайрĕ. Анне, вăл кайрĕ. Ваня!.. Пире эс кирлĕ, эс кăна... *(Выртса йĕрет.)*

Сутă сӳнет.

## Çиччĕмĕш картина

Тăваттăмĕш картинăри курăну. Пӳртре Таня пĕччен. Кăшт тăрсан Ваня кĕрет.

Таня. Эсĕ?

Ваня. Кĕретĕн-и?

Таня. Кĕтĕн пулсассăн ма ыйтатăн?

Ваня. Эпĕ паян санпа пулатăп.

Таня. Мĕн? Мĕн терĕн эс?

Ваня. Е эс кама та пулин кĕтетĕн-и?

Таня. Çук. Эс урăхла паян, ытлашши ĕçрĕн-и?

Ваня. Эп тăп-тăр урă.

Таня. Шел сана, ху ача çеç, çапах...

Ваня. Эп çирĕмре, чун вăтăрта, чĕре, тен, хĕрĕх-аллăра та.

Таня. Пĕлместĕп, чĕрӳ таппине илтмен.

Ваня. Илтĕн-ха. Эрех пур-и?

Таня. Чăн та, ĕç-ха. Ӳсĕр чухне эс капла марччĕ, урăлла хăратан мана.

Ваня. Çынсем ӳсĕрсенчен хăраççĕ.

Таня. Эп пач та шутламан эсĕ... *(Эрех ярса парать.)*

Ваня *(эрехне ĕçсе ярать).* Эп хам та шутламан. Эп пĕр тĕрлĕ çын пуласшăнччĕ, манран турĕç пач урăх тĕрлĕ çын. Халь эп пĕлместĕп хам камне те. Эп мĕншĕн килнине пĕлетĕн-и?

Таня. Эс кĕрсенех каларăн.

Ваня. Эс ăнланман.

Таня. Эп ăнлантăм пулĕ тенĕччĕ.

Ваня. Кĕçех Мăнкун. Мăнкунран урăх пурнăç пуçланать. Мăнкун эрнине кĕрсенех эпĕ сана качча илсе каятăп.

Таня. Мĕн? Мĕн терĕн эс? *(Ахăлтатса кулса ярать.)*

Ваня. Ан кул, эп иккĕ каламастăп. Фата та, çĕрĕ те илсе памастăп, машинăпа та кăшкăртса килместĕп. Çавăтатăп та илсе каятăп, çав кăна.

Таня *(çав-çавах кулса).* Ман тĕпри шăлсем кăна ванса пĕтнĕ. Сан вуçех те шăлсăр карчăк тупмаллаччĕ, туй илемлĕрех пулатчĕ.

Ваня. Ывăлна хыпар тусан та, тумасан та пултаратăн. Эп уншăн атте вырăнĕнче пулма шутламастăп, хăй çитĕнĕ. Саншăн пулăп çывăх çын ху маншăн та çавах пулсассăн.

Таня. Эх, Ваня, Ваня, шӳтлеме ăста эс. Чылайранпа кун чул кулманччĕ.

Ваня. Эп шӳтлеместĕп, лар çума. *(Таньăна вăйпа туртса хăй çумне лартать.)*

Таня. Ытла хытă ан тыт-ха, йысну пекрех пул. Е каласа памасть-и вăл сана? Пĕлетĕн-и, кам-кам кăна пулман ман çак вырăн çинче? Шутне хам та пĕлместĕп.

Ваня. Вĕсем халь çук. Паянтан эсĕ манăн çеç пулан. *(Таньăна ыраттармаллах чăмăртать.)*

Таня. Ай! Эс чăн та шӳтлеме килмен пулас.

Ваня. Шӳтлеместĕп, хампа та шӳтлеме ирĕк памастăп. *(Черкке тытса.)* Интереслĕ япала ак çак шĕвек, вăй нумай унра. Ăна ĕçетĕн те — тĕнче тикĕс. *(Ĕçсе ярать.)*

Таня. Урăлсан вара?

Ваня. Урăлсан эс юнашар пулăн, мана санран тек ним те кирлĕ мар.

Таня. Тепĕр чухне юнашарри те инçетре.

Ваня. Эпир ун пек пулмăпăр, эпир пĕр пек. Çурăм çине ӳкнĕ патаксен йĕрĕсем те, хамăр çине ӳкнĕ çын куçĕсем те, чĕре хавшакĕпе чунăмăрсен пăлханăвĕ те.

Таня. Чуну тулса килнипе çеç эсĕ çапла пуплетĕн. Эпĕ те илтрĕм туй пирки.

Ваня. Вара? Пĕрлешчĕр.

Таня. Эсир пĕрле çÿреттĕрччĕ-çке Соньăпа, çитменнине тата, ачи те...

Ваня. Эс курнă-и хура тăпра çинчи юн кÿлленчĕкне?

Таня. Эс паян темле ыйтусем паран...

Ваня. Мăн арçын юнне мар, хĕрарăмăнне те мар, пĕчĕк ача юнне. Хуп-хура çĕр çинче — хĕп-хĕрлĕ юн. Юн кÿлленчĕкĕ çинче вара пĕчĕк ача выртать, чĕри тапмасть, куçне уçмасть. Выртать çеç хускалми, амăшпе юнашар. Хăй мĕншĕн çуралнине ăнланма ĕлкĕреймен, ма вĕлернине пушшех те пĕлме пултарайман ача пурнăçĕ кама кирлĕ пулнă тен? Ăнсăртлăх-и ун вилĕмĕ е ятарласа çапла пултăр тени-и — ăна мĕн ĕç?! Вăл вилнĕ чунсăр çынна пула, çак тăнсăр пурнăçри тăнсăр тĕллевсене пула! *(Вырăн çине тĕлле-се.)* Çук, вăл тасамарлăх мана лĕклентермест, урăххи лĕклентерет. Мĕн вăл çак тасамарлăх? Ним те мар! Чун таса пултăр, тата ача сывă пултăр. Пĕр тумлам юлмиччен хам ăшри юнăма ун ăшне сăрхăнтарăттăм çав ачана чĕртсе тăратма май пулнă пулсан, анчах... Çук çăлăнăç тек маншăн.

Таня. Шел сана.

Ваня. Çăлсам мана.

Таня. Сана ачу çăлать.

Ваня. Çук, çăлаймасть, пушшех те çăлаймасть, вăл манпа пĕрлех пĕтет. Унăн урăх тĕнче пултăр, илемлĕ, çутă тĕслĕ. Манăн вара... Тепĕр тесен, ÿпкелер хамăра кăна. Атя ярар та тепрер черкке пĕтĕмпех манăçса иккĕн кăна юлар.

Таня. Ан ĕç тек. Эс тем сиктерсе кăларасран хăратăп эп.

Ваня. Ан хăра. *(Ĕçет.)*

Таня. Эс маншăн ют шутĕнче мар, çавăнпа хăратăп.

Ваня *(кравать каррине сирет те выртать)*. Мĕнле çемçе сан вырăн, юмахри пек çемçе. Мĕнле шутлан: ÿт тарласан чун ăшăнать-и?

Таня *(ун патне пырса)*. Эс чăн та ку пурнăçра мар. Тăна кĕрсен ÿкĕнсе вĕт ху.

Ваня. Мĕнле лăпкă, мĕнле канăç, ăшă, эс вара чĕтретĕн. *(Таньăна çупăрлать.)*

Таня. Ваня, эп саншăн аннÿне каяп.

Ваня. Эс анне мар, эс — пирĕшти, лăпкăлăха упраканни. Куçусем те ăшă сан, тугу ачаш, кăкăру манăн кăкăрпа пĕр пек сывлать. Ик пĕрлĕх пĕр çĕрте, тата мĕн кирлĕ?

Таня. Ваня, эп пултараймастăп. *(Аякка кайса тăрать.)*

Ваня. Ан тар! Хăтар мана усаллăхран, мана çăлакан та эсĕ кăна. Эс — юлашки шанчăк.

Таня. Эп сана çăлаймăп, сана çăлакан сăпкара выртать.

Ваня. Вăл çăлаймасть. Вăл манпа юлсан манпа пĕрлех

пётет. Ма ăна пĕтерес? Пурăнтăр вăл, ашшĕ ан та пĕлтĕр. Мĕне кирлĕ ăна ман пек атте? Ăна урăххи кирлĕ.

Таня. Урăххи урăх вăл, ют ăна.

Ваня. Вăл пурпĕр ăнланмасть. Унщăн пулсан кам юратать, çавă тăван.

Таня. Халь ăнланмасть пуль те, кайран вара...

Ваня. Ан пăтрат мана, пул маншăн пирĕшти.

Таня. Капла эпир иксĕмĕр те пĕтетпĕр.

Ваня. Пĕтме çырнă пулсан — пĕтĕпĕр те. Ан хăра, сана хам хыççăн илсе каймăп, вĕçертĕп пĕтессе сиссен.

Таня. Çук, Ваня, ан нушалантар мана. Сан хыççăн эп тĕнче хĕрне те кайăп, анчах... Ну кил, кил, лăплан. Ма мĕскĕн-ши эпир? *(Ваньăна пырса ыталать.)*

Çутă сÿнет.

### Саккăрмĕш картина

Пĕрремĕш картинăри курăну. Каçхине. Фаина такама кĕтет. Кăшт тăрсан пÿртрен Амăшĕ тухать.

Амăшĕ. Çаплах килни курăнмасть-и?

Фаина. Çук.

Амăшĕ. Веçех пăтрашăнчĕç.

Фаина. Пăтранас тесе пăтранаççĕ, хăйсен ирĕкĕпе.

Амăшĕ. Тем сиктерсе ан кăларччăрах. Паçăр Антун килсе çапăнчĕ, Ваньăна шыратчĕ. Пăхма йывăрччĕ ун çине.

Фаина. Ыран ун туй.

Амăшĕ. Илтрĕм. Малашне мĕнле пурăнăпăр терĕм те, пĕлместĕп, ку манран мар, веçех Ваньăран килет терĕ.

Фаина. Ваня Соньăран хăй пăрăнать пулмалла. Хăй писрĕ-ши, çын сăмахне пула-ши? Юратсан пăхса тăмĕччĕ ниме те.

Амăшĕ. Аçу та халь те çук. Нумай тăрать, ĕçмесĕр тавранмасть пуль.

Фаина. Анне, аттен Чĕлĕмре хĕрарăм пуррине эс пĕлнĕ-и?

Амăшĕ. Ан асăн куи çинчен.

Фаина. Кĕтÿ кĕтес тесе каять-и вăл унта е хĕрарăмне пула кăна-и? Пĕлнĕ пулсан мĕнле чăтнă эс?

Амăшĕ. Сирĕн çинчен шутланă. Сирĕншĕн вăл юта кайни пахаччĕ, çулла хăть канлĕн пурăнаттăмăр. Хам вара... Чăтнă ĕнтĕ, чăтнине пулах ак çакăн пек пулса юлтăм та. Эсир вара çитĕнеспе намăслана пуçларăр, шкулта сакăр класс пĕтерсенех хуланалла шăвăнтăр, качча кайрăр. Тĕрĕсех ÿпкелетĕн эс, сакăр ача çуратиччен...

Фаина. Анне, каçар мана ун пек каланăшăн.

Амăшĕ. Çук-çук, айăплă эп. Мана пулах эсир инкек тÿсетĕр. Хам та пурнăç тума пĕлмерĕм, ялан çитмен пурнăçпа пурăнтăмăр.

Фаина. Юрĕ, калаçар мар тек кун çинчен. Чиркĕве кайиччен çăмарта пĕветем. *(Кĕрсе каять.)*

Ватă хĕрарăм килет, вăл аллине шурă тутăрпа чĕркенĕ тулли чашăк тытнă.

Ватă хĕрарăм. Ватăлсассăн кĕске çул та вăрăмланать иккен. Ĕлĕк чух Шăмăршă çулне те ним вырăнне хумастăмăр, халĕ ак чиркĕве килме те ахлата-ахлата çеç. Ларатнам-ха? *(Унпа юнашар ларать.)*

Амăшĕ. Тата мĕн тумалла ĕнтĕ ман?

Ватă хĕрарăм. Эс манран чылай çамрăк, сан чупса кăна çÿремеллеччĕ-ха. Мĕне пĕлсе савнă-ши эс çав Сантăра, паян кунччен те тĕлĕнетĕп.

Амăшĕ. Çамрăк чухне ĕçки кун пек марччĕ унăн.

Ватă хĕрарăм. Çаплах ĕнтĕ, мĕнле пулсан та тăван тенĕ çын пирки усал сăмах илтес килмест. Эп те вăл пĕркун пырса кайнă хыççăн шухăшларăм та кĕлле кĕриччен сирĕн пата чарăнса калаçам тесех иртерех çула тухрăм. Ачасем тахçанах ÿкĕтлеççĕ те хăйсем патне куçса пыма, ун чухне хамăн каяс килмерĕ, хама çăмăлтарах туяттăмччĕ. Кăçал ак тĕрев çине куçрăм. *(Патаккине кăтартать.)* Мĕн пурăнни кунта ман? Хамран ытла ачасене нуша. Кăçал пахча акма мар, çум çумлама та тухаймарăм, вĕсенех килсе ĕçлемелле пулчĕ. Çавăнпа çурта сутасах терĕм. Ывăл пулмарĕ, тĕп вырăн мар. Çурт пушă ларсан пушшех юхăнать. Хĕрсем сутнă укçипе хăйсен хваттерне анлăлатăпăр теççĕ. Кĕрÿ лайăх, вĕсем патĕнче пĕр хуйхăсăр пурăнăп.

Пÿртрен Фаина тухать.

Фаина. Анне, сухан хуппине тупаймастăп эп.

Амăшĕ. Хутаççи чăланра пăта çинче çакăнса тăрать. Чим-ха, Сантăр ма пычĕ тетĕн-ха?

Ватă хĕрарăм. Çурт илес тесе ĕнтĕ, Ванюк валли тет. *(Кĕрсе кайма тăнă Фаина чарăнать, итлесе тăрать.)* Ачасем çуккипе ун чухне татăклăн калаймарăм. Паян ак Мăнкуна килчĕç те, сăмах пĕтертĕмĕр. Мăнкун ретне кĕртсе кăларсанах сутас терĕмĕр.

Амăшĕ. Сантăр хыççăн кайсан... Ăçтан пирĕн ун чул укçа?

Ватă хĕрарăм. Укçалла мар ара, темле хутла. Хаклă йышши хутсем пур тет сирĕн. Ачасем каларĕç: вăл хутсене

парсан çырлахма пулать терĕç. Çурчĕ ман çĕнĕ мар та, тĕреклĕ-ха, тиркемелли çук.

Амăшĕ. Ним калама та пĕлместĕп ĕнтĕ, манпа калаçса тумасть те вăл ĕçне. Хăй Чĕлĕме кайнăччĕ те-ха, таврăнаймарĕ-ха.

Вατă хĕрарăм. Таврăнсан калаçăр эппин, ачасем кайиччен сăмах татсан лайăхчĕ. *(Ура çине тăрать.)* Типĕ тытрăна çак?

Амăшĕ. Аш-пăш, юр-вар çимен.

Ватă хĕрарăм. Эпĕ ку эрнене тăрă шывпа кăна ирттертĕм. Ялтан таса ăш-чикпе тухса каяс. Пурне те каçаратăп, мана та каçарччăр. *(Чиркӳ хапхинчен кĕрсе каять.)*

Фаина *(амăшĕ патне пырса)*. Анне, вăл чăнласах калаçрĕ-ши?

Амăшĕ. Аçу хăш чухне тĕлĕнтерет çапла. Тахăш çуркунне Чĕлĕмре мана систермесĕрех вунă пăру илсе янă та кĕркунне аша панă. Хутаçпах укçа кĕрсе пачĕ вара. Халь тулькка унăн укçи çук. Хаклă текен хучĕсем пирки вара ним калама та пĕлместĕп.

Фаина. Анне, ман мĕн тăвас-ха? Мана та кирлĕ-çке укçа. Мускава каймалла ман, сипленмелле. Халь сипленмесен кайран шанчăк пушшех юлмасть. Вăл шанчăка та çухатсан тек пурăнма пултараймастăп эп, хама хам мĕн те пулин тăватăп. *(Кĕрсе каять.)*

Амăшĕ. Эп мĕнпе пулăшайăп-ха, ачам?

Самай тĕттĕмленет. Ватă çынсем, хушăран çамрăксем те чиркӳ хапхинчен кĕрсе çухалаççĕ. Ваня килет.

Ваня. Анне, ма ку тутăрпа эс?

Амăшĕ. Ху патăн-çке, çыхам-ха терĕм.

Ваня. Салт, юман çине уртса яр, хăть çулçă вырăнне пултăр. *(Амăшĕн тутăрне салтса юман çине уртса ярать.)*

Амăшĕ. Ваня... *(Куççульленет.)* Çумăнта хĕресӳ пур-и?

Ваня. Пур.

Амăшĕ. Таçта ан кай, кĕçех чиркĕве кĕрĕпĕр. *(Пӳртне кĕрсе каять.)*

Ваня. Чиркĕве? Çук пуль маншăн çăлăнăç ниçта та. *(Чиркӳ хапхи патне пырать.)*

Соня килет.

Соня. Ваня...

Ваня. Эсĕ? Ирт. Каçар, эп сан çулу çине тăнă пулас.

Соня. Ку çул пуриншĕн те пĕр. Чиркӳ тулашĕнче кăна кашнин уйрăм, сапаланчăк.

Ваня. Çыннисем тĕрлĕ, çавăнпа пуль.

Соня. Тӗрлӗ ҫав, хӑйсем пӗр шухӑшлӑ пуласшӑн мар. *(Чиркӳ хапхинчен кӗме тӑрать.)* Эсӗ кӗлле кӗретӗн-и?

Ваня. Тен, кайран самантлӑха.

Соня. Ячӗшӗн ҫеҫ кӗмеҫ унта.

Ваня. Чун туртнипе кӗме чун тасах мар.

Соня. Ӑна тасатасах терӗн-и ху? Ҫук, ҫын ҫулӗ ҫине мар, ху ҫулу ҫине урӑ тӑнӑ эс. Ҫылӑхне тӑвиччен веҫех ӗненмелле тӑван, кайран ячӗшӗн ҫеҫ — ак инкекӳ сан.

Ваня. Ҫана эп ячӗшӗн савман.

Соня. Ӗнентерӳллӗ мар.

Ваня. Эпӗ сана нихҫан та савма пӑрахман, ача ҫуралнине пӗлсен вара... Тен, ӑна пулах эп сывӑ юлтӑм. Кайран вара... Эп лере пӗр ачалла хӗрарӑма вӗлертӗм. Арҫыннисемпе пӗрле пулнӑ вӑл. Пӗр ҫурт патӗнчен тепӗр ҫурт патне пире автоматран персе чупатчӗҫ. Эп хамӑн автомата тытрӑм та вӗсене черетпе... Эп хӗрарӑмне курса ӗлкӗреймерӗм. Ман шухӑшласа тӑма вӑхӑт пулман: е вӗсем мана, е эпӗ вӗсене — вӑрҫӑра ҫапла унта. Кайран вӗсем патне чупса пытӑм, ниҫах ачи сывламастчӗ, чӗп-чӗрӗ юн кӑнатчӗ.

Соня. Ҫавӑнпах пиртен те пӑрӑнатӑн-и?

Ваня. Пурнӑҫӑмра ҫаптӑҫу кӑна, чунра — пушшӗх. Мӗн парӑп ачама ҫамка ҫине шӑпана картсах хунӑ пулсан?

Соня. Лайӑха ӗненменрен нушаланатӑн эс.

Ваня. Ӗненни мӗн усси? Ӗненнӗ пек пулса пыман хальччен.

Соня. Ача ҫуралнине пӗлсен савӑнтӑм терӗн ху.

Ваня. Ыранталн ун урӑх атте пулать.

Соня. Ваня, ма нушалантаратӑн эс пире? Эпир урӑххине кӗтмен, эпир сана кӗтнӗ, сана юратнӑ, эс вара...

Ваня. Соня, каҫар мана. *(Ыталанаҫҫӗ.)*

Авкран Ашшӗ кӑшкӑрса килни илтӗнет.

Ашшӗ. Эп вӗсене кӑтартап мӗнле ман ҫине алӑ ҫӗклемеллине. Эп ҫирӗм ҫул унта пурӑнтӑм, ҫирӗм ҫул унта кӗтӳ кӗтрӗм. Пурте мана куҫран пӑхатчӗҫ. Халь пӗр ҫапкаланчӑка хамран мӑшкӑллатаратӑп-и? Ваня, уҫ хапхана, пӑрусене кӑлар, сутатпӑр, пӑшал илетпӗр. Хам ҫине алӑ ҫӗклекене эп ахаль хӑвармастӑп, ман вырӑн ҫине кӗрсе выртакана та. Вӗлеретӗп иккӗшне те. *(Хапхана уҫса ярать.)*

Ваня. Хуп хапхана! *(Хапхана хупать.)*

Ашшӗ. Пӑрӑн, сан мар вӗсем, эс туянман. Мӗн тӑвас теп, ҫавна тӑватӑп: сутас тесен сутатӑп, пусас тесен пусатӑп. Хам ҫуртра никама та хуҫаланма ирӗк памастӑп! *(Хапха уҫма тӑрать, Ваня ӑна чышса ярать.)* Эсӗ те ман ҫине алӑ ҫӗклетӗн-и, эс те вӗсем пекех-и? Эп сана!

Ашшĕ Ваньăна çапма тăрать, Ваня хăйне çапса ярать. Пӳртрен Никитăпа Фаина тата Амăшĕ тухаççĕ.

**Фаина.** Татах ĕççе килнĕ.

**Ашшĕ.** Тĕрĕс, хуп, пăрусем юлчăр, вĕсем çылăхсăр. Çурт вара... Эп сан валли пултăр тесе кунта... Çук, сана ним те илсе памастăп. Эсир ман ачасем мар, эсир ютсем. Çук, сирĕн мар, ман сиртен тармалла. Ку таранччен хĕлĕнçăвĕн ĕçлерĕм, пурпĕр хисепе тивĕç пулаймарăм. Ячĕшĕн çеç мана атте тенĕ эсир, пурăнма та ячĕшĕн кăна пурăнатăр. Ячĕшĕн пуличчен нимĕн те ан пултăр. Хама хисеплеттерекенни вара ман пур-ха, анчах сире... Сире текех манрăн ним те лекмĕ! *(Пӳртне кĕрсе каять. Ларе тем ӳксе çĕмĕрĕлни илтĕнет.)*

**Никита.** Çиччас Мăнкун тутарать пире.

**Фаина.** Анне, каçарăр мана. Никита, эсĕ те каçар. Эп ача çуккипе, сипленме каяс тесе... Ваня, Соня, эсир те каçарăр.

**Никита.** Мĕн пирки эс?

Пӳртрен Ашшĕ тухать, вăл пĕр аллине икона тытнă, тепĕр аллине — çĕçĕ. Икона хыçне хăйпăтнă.

**Ашшĕ.** Хăшĕ? Хăшĕ кăларса илтĕр? Унта акцисемччĕ. *(Урса.)* Хăшĕ?! *(Фаина пӳрте кĕрсе каять.)*

**Ваня.** Эпĕ... Эпĕ кăларса илтĕм. Эп сан пурнăçна аркатрăм, эп сана хисепсĕр хăвартăм, тетене те эпĕ чире ертсе вĕлертĕм, аннене те ак çакăн пек çынна çавăртăм. Веçех эп айăплă, эпĕ çеç.

**Ашшĕ.** Эсĕ пулсан... *(Иконине пăрахать те Ваньăна çĕçĕпе чикет.)*

**Соня.** Ваня!

**Никита.** Мĕн турăн эс?!

**Ашшĕ.** Эп ăна чикесшĕн марччĕ, эп...

**Ваня.** Соня, ачана...

**Фаина** *(тухать, ун аллинче хутсем)*. Ак акцийĕсем, эп илнĕччĕ вĕсене.

**Никита.** Çаксемшĕн-и? Ма илтĕн?! Çын пурнăçне тăраççĕ-и вара вĕсем?!

**Фаина.** Ваня, каçар мана. Ваня!..

Чиркӳ картишĕнче çынсем хĕреслĕ çула тухнă. Чан çапать. «Христос чĕрĕлнĕ. Чăн-чăнах чĕрĕлнĕ» тенĕ сасăсем илтĕнеççĕ.

Вĕçĕ